Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 21 ВЫРСАРНИКУН 266 (4778)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне выљăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕнчухлĕ пулнине Пĕтĕм Сойузĕпе çырса тухасси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

1. ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленине (ЦУНХУ) ССР Сойузĕнчи йалсенче тата хуласенче, чи Çурçĕрти инçетри районсемсĕр пуçне, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне мăйракала шултра выљăхсем (буйволсене те, йаксене те), сурăхсем, качакасем, сыснасем, лашасем, тĕвесем, çавăн пекех тата ашаксемпе мулсем мĕнчухлĕ пулнине—вĕсене чылай ĕрчетекен вырăнсенче—çырса тухма хушас.

ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленине, колхозниксен тата йедиволичниксен килĕсенç вунă процентран кайа мар илсе, переписре палăртнисене контроллĕ тĕреслÿ иртерме хушас.

2. ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх-Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленийĕ выљăх-чĕрлĕхсене 1938 çулхи йанварĕн пĕрремĕшĕпе саккăрăмĕшĕ хушшинче çырса тухмала тăвас.

ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх-Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленине уйрăм тĕлсенче—перепис иртерме йăвăр уйрăм районсемпе йалсоветсенче выљăх-чĕрлĕхсене çырса тухмали ăрасна срuксемпе ăрасна йĕркесем тума ирĕк парас.

3. ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссариатне, ССР Сойузĕн Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариатне, выљăх-чĕрлĕх хуçалăхĕ тытакан ытти ведомствăсемпе организацисене те, государствă тата кооперации хуçалăхĕсен директорĕсене, çавăн пекех колхоз председателĕсене выљăх-чĕрлĕхсене 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне инвентаризаци тума, ку ĕçе перепис пуçланнă тĕле туса пĕтерме хушас.

4. Государствă тата кооперации хуçалăхĕсен директорĕсене, çавăн пекех колхоз председателĕсене 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне выљăх-чĕрлĕх хисепе çинчен тĕрĕс, хайсем тĕреслесе тухнă сведенисене, ССР Сойузĕн Государствă План Комиççийĕн Халăх Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленийĕ çирĕплетнĕ формăсем тăрăх, перепис иртерекен регистраторсене пама хушас.

5. Сойузлă тата автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, облăçсемпе районсен Ĕçтăвакан Комитечĕсене, хула тата йал Совечĕсене, çавăн пекех тата хула пек поçолка Совечĕсене çак ĕçсене тума хушас:

а) çитес вăхăтра выљăх-чĕрлĕхсене çырса тухассин пахалăхĕпе задачисем çинчен халăха ăнлантарса памала;

б) ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх-Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленине перепис ирттерме кирлĕ чухлĕ тĕреслене тата хатĕрлене работниксем памала;

в) перепис работникĕсене район тăрăх куçса çÿреме мĕн кирлине тупса памала;

г) перепиçе хатĕрленни çинчен тата перепиçе иртернĕ хыççăн—итогсем çинчен республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи Халăх Хуçалăх учочĕн Управлени начаљникĕсен, районсенче—Халăх-Хуçалăх учочĕн районри инспекторĕсен доклачĕсене итлемеле.

6. Çакăн пек йĕрке тăвас: перепис иртерекен счотчиксене кашнине, Халăх Хуçалăх учочĕн Тĕп Управленин вырăнти органĕсем тăратнипе, 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, райĕçтăвкомсем йе хула совечĕсем çирĕплетеççĕ.

7. Выљăх чĕрлĕхсене çырса тухассине тĕрĕс мар иртерсе, çавăн пекех перепиçе хирĕç тăрса йе выљăх-чĕрлĕхсене пытарса хăварса айăпа кĕнĕ çынсене уголовлă йĕркепе ответ тытараççĕ.

8. ССР Сойузĕн Государствă План Комиççин Халăх-Хуçалăх учочĕн Тĕп управленине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕне 1938 çулхи февралĕн 1 мĕшĕ тĕлне перепиçĕн малтанласа тунă итогĕсене, 1938 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне перепиçĕн татăклă итогĕсене тăратма хушас.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. Молотов.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ
Н. Петруничев.

Мускав, Кремĕл,
1937 çулти нойабĕрĕн 19-мĕшĕ.

Стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ

Мускав хулинчи Сталинск районри стахановецсен ССР Сойуз Аслă Совечĕн суйлавĕ умĕнхи социалисăмла обйазателстви

Нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче, каçхине, стахановецсем 1.100 çын—столицăн Сталински районĕнчи предприйатисенчи рабочисем, работницăсем, инженерсем тата техниксем стахановецсен районри пухуне, ССР Сойуз Аслă Совечĕн суйлавĕ май илнĕ обйазателствăсене тултарас ыйтува сÿтсе йавма пухăннă.

Пухура тухса калависем пурте çĕклентерÿлĕ хаваслăхпа каланă. Сталински районри суйлавçăсем хăйсен сасне халăхсен йуратакан çулпуçĕшĕн, ĕççыннисен ашшĕшĕн тата тусĕшĕн—Сталин йулташшăн пама тележлĕ пулчĕç. Стахановецсем çулталăкри производствă планне срукчен—1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ тĕлне тултарма çирĕп сăмах панă.

— Епĕр,—тет Л. М. Каганович йачĕпе тăракан прожектор заводĕн механически цехĕнчи рабочи Фатов йулташ,—хамăр ĕçе уйăхран уйăхах лайăхлатса пытăмăр. Августра, Октабĕр револђуци уйавĕ умĕнхи социалисăмла ăмăртун пирвайхи уйăхĕнче, епĕр программăна 117,2 процент тултартăмăр. Ку уйăхра ĕçтухăçлăхĕ 174 процент пулчĕ. Тата пĕтĕм рабочисен йышĕнчен 74 проценчĕ стахановецсем пулнăччĕ.

Октабĕрте, пирĕн коллектив ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа палăртсан,—тет Фатов йулташ,—епĕр, болђшевикла çине тăрса ĕçлесе, хамăрăн обйазателствăсене тата лайăхрах тултарса пыма пуçларăмăр. Программăна 127 процент тултартăмăр. Ĕçтухăçлăхĕ 186 процент пулчĕ. Пĕтĕм рабочисен йышĕнчен 87,5 проценчĕ стахановецсем пулса тăчĕç.

Епĕр, заводри пĕтĕм коллектив, çулталăк программине декабĕрĕн 12-мĕшне тултарма пултăмăр. Çапла епĕр пирĕн тусшăн тата çулпуçшĕн—Сталин йулташшăн сасă парас куна производствă программине тултарса кĕтсе илетпĕр. Сталин йулташ пирĕн суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ панă хыççăн пирĕн коллектив виçе хут хăвăтлăрах ĕçлеме пуçларĕ.

— Пирĕн цехра пурте пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Сменă сменăпа, бригадă-бригадăпа, цех—тепĕр цехпа. Çапла ĕçлесе, епĕр çулталăк программине пайанхи куна 99 процент тултартăмăр. Çакă вăл пире—пирĕн цех хăй çине илнĕ обйазателствăна декабĕрĕн 12-мĕшне тултарать, тесе калама права парать.

Сталин йулташ Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсене пысăк хисеп турĕ. Стахановецсен пухувĕнче тухса калакансем Сталин йулташа çак хисепшĕн производствăра рекордсем тунипе ответлеме сĕнеççĕ. Пухура пулнисем çакăн пек сĕнÿсене хавассăн йышăннă.

Пуху:

— Районри предприйатисенче декабĕрĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа декабĕрĕн вуннăмĕшне çитиччен стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне иртерес, тесе йышăнна. Çак постановленийе пухура пулнисем хĕрÿлĕн ала çупса йышăннă.

Стахановецсен пухувĕ тăвăллăн оваци туса, Сталин йулташ патне салам йама йышăннă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Испанири тĕпри, хĕвел тухăçри тата кăнтăрти фронтсенче йулашки вăхăтра тупăсенчен тата пăшалсенчен вăйлăн перĕе тăма тытăнни палăрать. Фашисла çарсем тĕмиçе хут та малала, уйрăмăнах çурçĕр-хĕвеланăçнеле куçма тăнине республикă çарĕсем ăнăçлă вирсе пăрахнă.

Республикă артиллерийĕ фашиссен позицийĕсем çине вăйлăн персе тăрать. Сарагоса хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнеле (арагонири фронт) республикă артиллерийĕ пенипе нойабĕрĕн 18 мĕшĕнче фашис çарĕсен темиçе колонниех пĕтерне.

(ТАСС).

„Пурте, пĕр çын пек сасăлама кайатпăр"

Хĕрлĕ столицă историлĕ аслă куна хатĕрленет

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кампанийĕ пĕтĕм совет халăхне хускатрĕ, ĕççынни массисене болђшевиклă парти тата унăн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата та ытларах пĕтĕçтерчĕ.

Хĕрлĕ столицари ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама калама çук пысăк çĕкленÿпе хатĕрленеççĕ.

Сойуз Советне депутата суйламали кандидатшăн—халăхсен çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталиншăн сасăлама чыс тивнĕ Мускаври Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем хушшинче суйлав умĕнхи агитаци анлăн саралать.

Сталински суйлав округĕнчи 23-мĕш участкăра нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче пулнă суйлав умĕнхи пухува 900 ытла суйлавçă пуханнă.

„Пирĕн аслă Сталин йулташа мĕлйуншăр ĕççыннисем тăватнă,—тенĕ пухура килхуçи хĕрарăмĕ П. В. Зеленова йулташ,—пире Сталински округри суйлавçăсене, пысăк савăнăç тиврĕ—Сталин йулташ баллотировкăра пирĕн округра тăма килĕшÿ пачĕ. Ку пысăк, аслă чыс Пирĕн ăна тавармала, епĕр ăна таваратпăр ах. Декабĕрĕн 12 мĕшĕнче епĕр пурте, пĕр çын пек сасăлама кайатпăр тата хамăр бÿллетенсене хамăр йуратнă, тăван Сталин йулташшăн йаратпăр, кунпа епĕр Сталин йулташа йуратнине кăтартатпăр".

Нойабĕрĕн 18 мĕшĕнче Сталински суйлав округне кĕрекен Сталински районра, довереннăй çынсем, агитаторсем, беседчиксем пĕтĕм суйлав участкисенчех агитацилле-массăллă ĕçсем туса иртерчĕ. Вĕсем канмалли кунпа уса курса, пур киле те кĕрсе районри суйлав умĕнхи канашлу пĕтĕм суйлавçăсем патне чĕнсе йанă сыру çинчен ăнлантарнă, пĕтĕм суйлавçăсене ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пыма тата Сталин йулташшăн сасăлама чĕннĕ Кунсăр пуçне вĕсем кашни суйлавçăн хăй участкине кĕрсе хăйне суйлавçăсен списки çине тĕрĕс кĕртнине тĕреслеме чĕннĕ. Ку кун Сталински районра нумай ĕççыннисем спискăсемпе паллашнă. Тĕреслене хыççăн, спискăсем, пĕтĕмĕшпе илсен, тĕрĕсси курăннă. Кăнтарла Сталински районра пилĕк агитавтомобил ĕçленĕ. Вĕсем çумне çирĕплетнĕ аги аторсем уйрăм çуртсен карташĕсене оркестрпа пынă, кунта вĕсем митингсем туса иртернĕ.

Столицăри Кировски суйлав участкинче нойабĕрĕн 18 мĕшĕнче пулнă митинга 85 пин ĕççынни пуханнă. Ку митинга вĕсем регистрацилене кандидатурăсене—Кировски суйлав округĕнчен Сойуз Советне суйлама тăратнă ПСК(б) Партин Мускав Хула Комитечĕн секретарĕ Г. А. Брагановский йулташ тата Мускав хула суйлав округĕнчен Националђнăçсен Советне суйлама тăратнă РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Н. А. Булганин йулташ çинчен сÿтсе йавма пуханнă.

Митингра пиравăр пĕрремĕш фабрикăри стахановкă Чернобровкина йулташ тата „Геодезийа" заводри мастер Малђков йулташ çапла тухса калана: „Историлĕ кун —декабĕрĕн 12 мĕшĕнче—Кировски округри ĕççыннисем пурте, пĕр çын пек, çирĕп, пирĕн тăван çĕршывăн паранна ывăлĕсемшĕн—Братановскийпе Булганин йулташсемшĕн сасăлама кайаççĕ".

Митингра Братановский йулташ сăмах каланă. Ăна митинга пухăннисем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Митингра пулнисем, пĕр сасăпах хаваслансă, кашкăрса ала çупса халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

Ленинградри суйлав умĕнхи совешчанисем

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Ленинград хулинчи Володарски, Петроградски, Свердловски, Московски, Красногвардейски районсенче, Кингисепп тата Ленинград йал суйлав округĕсенче суйлав умĕнхи совешчанисем пулса иртнĕ. Совешчанисенче халăх пит нумай—пурĕ 10 пин çынна йахăн ĕççыннисем пулнă.

Володарски районри суйлав умĕнхи совешчанире икĕ пин çынна йахăн пулнă. Ленин йачĕпе тăракан заводри бригадир Жуков йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

„Пирĕн заводра Националђнăçсен Советне депутата суйлама Михаил Иванович Калинина тата Сойуз Советне депутата суйлама Андрей Александрович Жданова кандидата палăртнă. Калинин тата Жданов йулташсем пирĕн суйлав округĕсенче баллотировкăна тăма килĕшÿ панине пирĕн заводра калама çук пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç.

Епĕ шанса тăратăп: Володарски суйлав округĕнчи ĕççыннисем пурте пĕр çын пек пулса Калинин тата Жданов йулташсемшĕн сасăлĕç".

Петроградски районри суйлав умĕнхи совешчанире фабриксен, заводсен, аслă шкулсен, ЖАКТ сен представителĕсем 1.300 çынна йахăн пулнă.

„Электрик" заводри мастер Засорнов йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

„Епĕр Сойуз Советне депутата суйлама М. М. Литвинов йулташа палăртрăмăр, мĕншĕн тесен вăл аслă Совет Сойузĕн тулти политикне болђшевикла йертсе пырать, Ленинăн—Сталинăн „мир йалавне хисеплĕн илсе пырать".

Московски районри суйлав умĕнхи совешчанире çĕршыври паллă стахановец, Московски суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Сметанин йулташ сăмах тухса каланă.

„Йулташсем, — тенĕ Сметанин йулташ,—ку пухура епĕ нихçан хинчен ытла хумханатăп, мĕншĕн тесен ман çине пысăк шанчăк хунă. Çавăншăн пĕтĕм чĕререн пысăк тавтаватăп. Тăван çĕршыв тивлечĕпе, пирĕн парти тивлечĕпе, аслă Сталина пула епĕ çакăн пек хисепе тивĕçлĕ пултăм". (ТАСС).

Мускаври Молотовски районĕнчи ĕççыннисен суйлав умĕнхи канашлăвĕ

Нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ Мускав хулин Молотовски районĕнчи суйлав умĕнхи канашлува 2.500 ытла ĕççынни пуханнă. Канашлура сăмах тухса каланă Клара Цеткин йачĕпе тăракан фабрикă работници Леонова йулташ, пенсионер Горбунов йулташ, Бардин академик, НКВД шкулĕнче вĕренекен Серебрйаков йулташ, учител Коридалин йулташ тата ыттисем те хăйсен хĕрÿлĕ сăмахĕсенче, вĕсем хăйсем суйланă çынĕ Сталин йулташăн çывăх соратникĕ Вйачеслав Михайлович Молотов пулнипе тулли кăмăллă пулни çинчен тата Молотовшăн хăйсен сассисене калама çук пысăк хаваслăхпа пама хатĕрри çинчен каланă.

Сăмах тухса калакансем Националђнăçсен Советне депутата суйлама кандидата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне Н. А. Булганин йулташа тăратнине хĕрÿлĕ саламланă.

Булганин йулташ трибунă çине тухсан, ăна пĕтĕм зал хаваслансă ала çупса кĕтсе илнĕ. Булганин йулташ канашлăва пухăннисене тата Молотовски суйлав округĕнчи пĕтĕм ĕççыннисене хăйĕн çине пысăк шанчăк хунине ĕçре кăтартма пĕтĕм вăйне хуратăп, тесе шантарнă.

Канашлу Сталинпа Молотов йулташсем патне саламлă çырусем йама йышăннă.

(ТАСС).

Суйлавçăшăн тăрăшни

КАЛИНИН, нойабĕрĕн 19-мĕш (ТАСС). Калинин хула суйлав округне кĕрекен Калинин районĕнчи Борисовски участкăри суйлав комиççийĕ кашни суйлавçăшăн тăрăшать.

Çав участкăри суйлавçăсем пурăнакан пур çуртсене те йатарласа çырнă çырусем йанă. Вăл çуртсенче комиççи хăй ăçта вырнаçни, суйлавсем ăçта иртесси, суйлав саккунĕ тăрăх ăçта консулђтаци илме май пурри тата справкăсем паракан сĕтел ăçта вырнаçни çинчен пĕлтерне. Суйлавçăна суйлав комиççи членĕсем хăш вăхăтра дежурствăра тăни тата суйлавçăсен спискипе ăçта паллашма пултарни çинчен те пĕлтереççĕ.

Çыру 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун пулни çинчен астутарнипе вĕçленет.

Националђнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Герасим Иванович Иванов

Куславккари „Стройдеталђ" комбинатĕнчи тата Вăрмар районĕнчи спорт инвентарĕсене тăвакан фабрикăри рабочисен, служăщчисен тата инженерсемпе техниксен суйлав умĕнхи пухувĕ тата Вăрмар суйлав округĕнчи нумай колхозсенчи колхозниксен пухувĕсем Вăрмар суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националђнăçсен Совет депутатне суйлама кандидата Иванов, Герасим Иванович йулташа—ПСК(б)П Чăваш Облăç комитечĕн пĕрремĕш секретарне палăртрĕç.

Иванов, Герасим Иванович 1905 çулхи февралђ уйăхĕнче, Канаш районĕнчи Тĕмер йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Националђнăçĕ—чăваш. 1913 çулпа 1918 çул хушшинче йалти двухкласнăй шкулта вĕреннĕ. Иванов йулташăн вĕренĕвĕ çакăнпа пĕтмест. Хăйĕн вĕренĕвне малала чăсасшăн çав тери çуннă пирки, ашшĕ-амăшĕсем чухăн пурăннă пулин те Иванов йулташ 1918 çулта Канашри педтехникума вĕренме кĕрет те унта 1920 çулчен вĕренет. Анчах Иванов йулташăн хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртсе педагогикă техникумĕнчен вĕренсе тухма май килмест. 1921 çулта Атăл тăрăхĕнче выçлăх пулнă пирки унăн вĕренме пăрахма тивет. Вăл вара йалхуçалăхĕнче ĕçлет.

Çак вăхăтра вăл обшчествăлă-политикăла ĕçе активлăн хутшăна пуçлать.

1923 çулта вулăсри комсомол организатăрĕ пулса ĕçлет. Çав çулах вăл Чăваш облăçĕнчи Совпартшкула вĕренме кĕрет, вара вĕреннĕ вăхăтрах ПСÇЛКС Шупашкар Горкомĕнче ĕçлет, Совпартшкула 1925 çулта вĕренсе пĕтерет. 1925 çулта Пĕтĕмсойузлă Коммунисла (болђшевикла) Парти ретне кĕрет.

1925 çулхи ийулђ уйăхĕнчен пуçласа ПСÇЛКС Çĕрпÿ Уком секретарĕн заместителĕ, 1925 çул пĕтнĕ тĕлеле Çĕрпÿ уйесĕнчи Тĕмер вулăçĕнчи вулăсри парти ĕçĕнче ĕçлет.

1925 çулхи декабĕр уйăхĕнче Тĕмер вулăçĕнчи Советсен сйеçĕнче ăна вулăсри ĕç тăвакан тĕп комитет членне суйлаççĕ, вара 1926 çулхи февралђ уйăхĕччен вăл Вулĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет.

1926 çулхи февралђ уйăхĕнчен пуçласа вăл парти ĕçне куçса ПСК(б)П Çĕрпÿ Укомĕн инструктăрĕ пулса ĕçлет. 1926 çулхи октабĕр уйăхĕнче çавăнтах ПСÇЛКС Çĕрпÿ уйес комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлеме тытăнать. 1927 çулхи август уйăхĕнче Чăваш республикине районсене пайланă чухне ăна Йĕпреç районĕнчи ПСК(б)П оргбÿро членĕ туса хураççĕ, унта ăна ПСК(б)П Райком секретарĕн заместителне суйлаççĕ. 1928 çулхи ийулђ уйăхĕнчен пуçласа ПСК(б)П Шупашкар райкомĕнче çав ĕçрех ĕçлет.

1929 çулта Иванов йулташ Ленинградри Сталин йачĕпе тăракан комвузра вĕренме тытăнать. Вара 1932 çулта (Комвуз пĕтернĕ хыççăн) Чăваш парторганизацинче ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропгруппин составĕнче ĕçлет. ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропгруппинче ĕçленĕ чухне Иванов йулташ хăйне массăсене марксисăм-ленинисăм никĕсне лайăх та тĕрĕс ăнлантарса пама пултаракан талантлă пропагандист пулнине кăтартрĕ.

1933 çулхи ийулђ уйăхĕнче ăна ПСК(б)П Йетĕрне Райкомĕн секретарне суйлаççĕ те çак ĕçре вăл вара 1937 çулхи ийунђ уйăхĕччен ĕçлет. Çак вăхăтра вăл тăтăшах ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн членĕнче тăнă.

Йетĕрне районĕнчи парти организацинче ĕçленĕ хушăра та Иванов йулташ хăйне социалисăм строителстви ĕçĕшĕн, Сталин йулташăн колхозниксене пуйан та кулђтурăлă пурăнмала тума хушакан кăтартăвне пурнăçа кĕртессишĕн ăçта та пултарулă организатăр тата çав ĕçĕн активлă çынĕ пулнине кăтартрĕ.

1937 çулхи ийунђ уйăхĕнче Чăваш республикĕнчи парти организацин XVIII конференцийĕ Иванов йулташа Обком пленумĕн членне суйлать, пленум вара Обком бÿровĕн членне тата парти органĕсене йертсе пыракан пайăн заведуйушчине суйлать. 1937 çулхи çентабĕр уйăхĕнче Обком пленумĕ ăна ПСК(б)Партин Чăваш Обкомĕн иккĕмĕш секретарне суйласа лартать, нойабĕр уйăхĕнче пленум вара ăна пĕрремĕш секретарне суйлать. Иванов йулташ хăй партире пулнă вăхăтра тăтăшах партин тата халăхăн тăшманĕсемпе активлăн кĕрешсе пынă, пырать те. Вăл хăй Ленинпа Сталин ĕçне пĕтĕм чĕререн паранна, çирĕп болђшевик пулнине кăтартрĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат

Андрей Михайлович Краснов

Çĕмĕрле суйлав округĕ № 367

* * * * * *

Краснов Андрей Михайлович биографийĕ

Çĕмĕрле суйлав округĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем, колхозниксемпе колхозницăсем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата Краснов Андрей Михайлович йулташа—Чăваш республикĕнче малти ретре тăракан колхоз председателне палăртнă.

Краснов Андрей Михайлович 1906 çулта, Чăваш республикĕнче, Йетĕрне районĕнчи Тури Ачакра чухăн хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ. Вăл чăваш çынни, йалти шкулта вĕренсе тухнă.

1923 çулта Краснов йулташ Çамрăксен Коммунисла Сойузĕн ĕретне кĕрсе ленинла комсомолта ку таранччен активлă ĕçлет. 1926 çулта вăл ПСÇЛКС волком секретарĕ. 1926 çулта Краснов йулташ совет ĕçне куçат те хăйсен йалĕнче йалсовет председателĕ пулса 3 çул ĕçлет.

1929 çулта Краснов йулташ производствăна куçат. Вăл Йетĕрнери спирт заводĕнче—производствă заведуйушчийĕ. Ку заводра вăл 1931 çулччен ĕçлет. Кунта заводăн общественлă пурнăçне активлă хутшăнса политика тĕлĕшĕнчен хăвăрт ÿсет. 1929 çулта ăна ПСК(б)Парти кандидатне илеççĕ, 1931 çулта ПСК(б)Парти членне куçараççĕ. Ударлă ĕçленĕшĕн Краснов йулташа темиçе хут та премиленĕ. 1931 çулăн вĕçĕнче ăна, чи лайăх рабочи-ударник пулнипе, Кострома хулине нормировщиксен курсне вĕренме йараççĕ. Курсран вĕренсе таврăнсан ăна Йетĕрнери спирт заводĕнче техник-нормировщик тăваççĕ. Парти ĕçне парăнса ĕçлекенскере, социализăм строителствишĕн активлăн кĕрешекенскере—Краснов йулташа 1933 çулта каллех, чи кайа йулса пыракан Шăмат йалсоветне председателĕ пулса ĕçлеме куçараççĕ. Кунта вăл аван организатăр пулса ĕçленине кăтартрĕ, Краснов йертсе пынипе йалсовет малта пыракансенчен пĕри пулса тăчĕ.

1934 çулта парти райкомĕ Краснова „Крестьянская газета" йачĕпе тăракан колхоза тĕреклетме йарат. Кунта вăл колхоз председателĕ пулса ку таранччен ĕçлет.

Колхоза политикăпа хуçалăх йенчен тĕреклетес тĕлĕшпе питĕ лайăх ĕçленĕшĕн, пысăк тырпул туса илнĕшĕн Совет правителстви 1935 çулта Краснов йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕн орденĕпе наградăлавă.

Краснов йертсе пынипе Тури Ачак колхозĕ кайа йулса пыракан колхозран районĕпе çеç мар, пĕтĕм Чăваш республикĕпе малта пыракан колхоз пулса тăчĕ.

1937 çулта та колхоз пысăк тырпул туса илчĕ—ыраш гектартан 22 центнер, кĕрхи тулă—25 центнер.

Пысăк тухăçлă тырпул маç·ăрĕ—Краснов йулташ 1935 çулта колхозник-ударниксен II-мĕш сиесĕн тата йалхуçалăхĕнче малта пыракансен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕн делегачĕ пулнă.

Обществăлă-политикăлă пурнăçра Краснов йулташ питĕ активлă ĕçлесе пырат: вăл колхозăн парторгĕ, Йетĕрне райкомĕн, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн тата ПСÇЛКС Обкомĕн членĕ пулса ĕçлет.

I. Çăкăр татăкĕн хакĕ

Андрей Михайлович Краснов халĕ 31 çулта. Вăл Йетĕрне районĕнчи Тури Ачак йалĕнче, чухăн хресчен семйинче çуралса ÿснĕ. Ашшĕ унăн, Михаил Иванович йалта йатлă çынах пулман пулин те, хăй пек чухăнсемшĕн çывăх çын пулнă. Вĕсем Михаил Иванычпа калаçса, хăйсен йа-хуйхи-суйхисене пусарнă, пурнăçри йа-вăрлăхсене çăмăллатнă. Красновсем çемйере çиччĕн пурăннă. Çак çичĕ йатакла йере çиччĕн пурăннă. Çак çичĕ йатакла вĕсем револуциччен пĕр йат çурă тÿпине тивекен çĕре акса тăнă. Çемçе те лативекен çĕре акса тăнă. Çемçе те лапамлă, тикĕс çĕрсем çине Долгов, Можайкин, Кондукторов кулаксем тымар йанă. Чухăнсем ту çамкисенче чăваланнă. Андрей, чул пек хытă анасем çинче чĕркуçланса тырă вырнисене лайăх астăват. Амăшĕн шăпăртатса куççулĕ йухатчĕ, вăл вĕт-шакăр ачасене хăй макăрнине систерес мар тесе, кал-каллăнрах ĕçлеме чĕнетчĕ. Анчах çак ĕмĕртен вырăнта пурăннă çĕр çинче темĕн чухлĕ чăвалансан та, Красновсем уйхиртен тырă нихăçан та 40—50 пăтран ытла пухса кĕреймен. Çăкăр татăкĕ виçелĕ те хаклă пулнă. Тырпула пĕрер пĕрчĕн тытнă пек тыткаланă. Çапах та вĕсем çак тырăпа çур хĕле çеç çитме пултарнă. Малалахи шанчăк—ашшĕ. Сĕтел йĕри-тавра кашăк тытса ларакан вĕт-шакăрсем ашшĕ куçĕнчен пăхнă. Ашшĕ вара çакна туйса, мĕн хĕле кĕрсенех, аршăн тытса, çумма йĕппе çип чиксе, йалсем тăрăх çĕвĕ çĕлесе çÿреме тухса кайнă.

Андрей семйере иккĕмĕш ывăл пулнă. Çил çамкинче чĕркуçланса тырă вырнисем, амăшĕн куççулĕ, ашшĕн канăçсăр пурнăçĕ çамрăк ачана шухăшлаттарнă, ун чĕринче темĕнле тăвăл вăратнă. Андрей, çынсен ачисем вĕреннине курса, хут вĕренме кайасшăн çуннă. Анчах йалта шкул çукки ун кăмăлне питех те кÿрентернĕ. Андрейĕн шкула кайма тумтир пулман. Вăл хăй тĕллĕн пăшăрханнă, макăрнă. Çулсем иртсе пынă. Йал йĕри-тавра халăхи пек хавасла йурă мар, чан сасси илтĕннĕ. Тури Ачакран ултă çухрăмра ларакан Хучаш йалĕнче пĕр чиркÿ пулнă, тăватă çухрăмра ларакан Мăн Йавăшра—тепĕр чиркÿ, виçĕ çухрăмри Шемертенре—татах тепре, а шкулсем—пулман. Вунпĕр çула çитсен тин Андрей шкула çÿреме май тупат. Вăл 1917 çулта Хучаш шкулне кайса кĕрет, унта пĕр çул вĕренсе пĕтернĕ çĕре, совет влаçĕ Ачакра шкул уçса парат. Андрей çавăннипе мĕн пур вăйне хурса вĕренме тытăнат. Унăн умĕнче аслă кунçул алăкĕ чарийĕн уçăлса кайат. Краснов пурнăç çулĕ çине тухат.

II. Пурнăç çулĕ—кĕрешÿлĕ çул

Йалти шкул хыççăн, Краснов Хучашри ултă çул вĕренмели шкула вĕренсе пĕтерет. Кунтах, 1923 çулта, комсомола кĕрет. Вăл йалти обществăлă ĕçе активлăн пуçарса пырат, çамрăксене пурнăç ыйтăвĕсене ăнланма вĕрентет, хăй те пĕрле вĕренет.

Краснов йулташ 1926 çулта Шăмат волкомолĕн секретарĕ. 1926 çултах ăна çирĕм çулхи хĕрÿлĕ йĕкĕте, Ачак йалĕнчи ĕçсыннисем йалсовет председателне суйлаççĕ. Вăл кунта виçĕ çул ытла ĕçлесе, государствă ĕçĕн наукипе искусствине тĕплĕн вĕренет.

...1929 çул. Йалта колхоз хумĕ тапраннă. Тăвăллă вăхăт. Краснов — Тури Ачак йалсовет председателĕ. Государствă тырпул хатĕрлет. Краснов—йалти тырпул хатĕрлев комиççин председателĕ. Тĕштырăн политикла пахалăхĕ кунсерен ÿссе пырат. Кулаксем совет государствин никĕсне çак йенчен кисретме ăмсанаççĕ. Вĕсем хăйсен тыррисене тирĕс пек çĕр чавса çĕре пытараççĕ. Андрей Михайлович кулаксене çирĕп алăпа тыткалат. Тăшман çиллине шăнараймаст. Пĕринче çапла хатĕрлев комиççин шавлă ларувĕ хыççăн Андрей Михайлович çĕрле, икĕ сехетре киле çитсе, саланса выртат кăна, чÿрече кантăкĕнчен çулăм йалкăшни курăнса кайат. Красновсен çуртне кулаксем вут тивретнĕ. Ĕмĕр хушшинче пĕрер вутсыппин пухнă килçурт кĕл пулса йулат. Анчах Красновăн чĕрк çемçелмест, вăл çак кунтан ĕмĕрлĕхех хурçă пулса тăрат.

III. Тимлĕх

— Тимлĕх!—Ку сăмах пайан приказ мар, вăл, кашни тÿрĕ кăмăллă колхозникĕн чĕрипе васкавлăнрах таптарса тăракансер, чуна, чĕрене кĕрет. Аслă çулпуçĕ Сталин политикăла тимлĕх çинчен уйрăмăн асăрхаттарнă хыççăн, вăл сăмах халăх вăйĕ пулса тăчĕ. Андрей Михайлович час-часах пĕр ыйăх çывăрса вăрансан, кĕрхи аскăн çил урам тăрăх чупнине итлесе выртат. Час-часах вăл хăвăрттăн тумланса, хуралçăсене пăхма тухса кайат.

Кĕрхи каçсем тарăн та тĕттĕм. Тăшман кун пек чух çывăрмаст. Кулаксен халĕ ăшĕнчи çĕрĕк сĕлехесĕр пуçне, урăх нимĕн те йулман, анчах вăл çапах та хăйĕн сăхă аллипе коммунизăм пуйăсĕн хăватлă кустăрми йеннелех тăсалат—вăл ăна тытса чарасшăн. Пирĕн истори кулака çĕр çинчен мотыгăпа мар, тракторпа тăпăлтарса кăларчĕ. Хайар клас кĕрешĕвĕнче йаланах епĕр çĕнтерсе пынă, халĕ те пыратпăр. Андрей Михайлович Краснов çакă хайар клас кĕрешĕвĕнче халăх ĕçĕнче ÿснĕ. Вăл халăх пурлăхне мĕн çамрăкранах çывăх чĕрепе хаклама вĕреннĕ.

Акă вăл халĕ, пысăк мар, çăмăл шăмшаклăскер, кĕрхи çиллĕ каçа пăхмасăрах, пĕр хуралçă патĕнчен тепĕр хуралçă патне çитет—хытарат, хÿтерет, тĕрĕслет. Шанчăклă хуралçă Иван Семеныч тури витесем патĕнче хурал тăрат. Вăл йытăсене иккĕшне те сăнчăртан вĕçертнĕ. Анчах çак икĕ каç хушшинче „Дамка" уйрăмах темшĕн питĕ хытă вĕрчĕ. Колхоз килкартийĕ колхозниксен сатпахчисем патнех пырса тĕкĕнет. Иван Семеныч сатпахчисем йеннелле тинкерсе пăхат. Вăйлă çил çинче сулланса тăракан улмуççисем чĕррĕнех курăнаççĕ. Иван Семеныч „Дамкана" унтала вĕçлетет. Çак вăхăтра урам йенчи хапхаран колхоз картишне çын кĕрет.

— Кам вăл?—ыйтат Иван Семеныч. „Дамка" вĕрме чарăнса, хаљ кĕнĕ çын йеннеле чупса кайат. Иван Семеныч колхоз председателĕ килнине тавçăрса илет. Андрей Михайлович çапах та сăмах хушма васкат.

— Пурте тĕрĕсех-и, Иван Семеныч?

Хуралçă васкасах Андрей Михайлович патне утса пырат. Унтан йĕрипен шавламасăр, çак ик-виçĕ каç хушшинче йытăсем питĕ вĕрни çинчен калаçа парат.

— Темĕн сисеççĕ пулмала вĕсем?!—тет Иван Семеныч.

— Çывăрас пулмаст, — ответлет Андрей Михайлович. Хăй çав вăхăтрах йалта пурăнакан Долгов, Можайкин, Прокопйев çинчен шухăшлат. Вĕсене колхоз пуçланнă çул йалтан тăпăлтарса кăларса, тивĕçлĕ çĕре йанă. Анчах иртнĕ çулсенче вĕсем тепле майпа тастан çăва тĕпĕнчен кайалах йала çаврăнса килчĕç. Пурăнаççĕ те, пурăнаççĕ... çапах та вĕсен утăмĕсем ырă мар шухăшлаттараççĕ. Темĕнле вăрттăн ĕç тунă пек вĕсем...

— Йурĕ, тĕпчесе пăхăпăр, — терĕ Краснов, Иван Семеныча хăплантарса. Хăй ытти постсене тĕрĕслеме малала уттарчĕ.

..Тепĕр кунне чăн та кĕтнĕ пекех, Долгов, Можайкин, Прокопйев кулаксене тивĕçлĕ оргăнсем тивĕçлĕ çĕре ăсатрĕç.

IV. Тĕрекленет колхоз

Йалта колхоз организациленĕ хыççăн, колхозниксем кулаксене çĕр çинчен шăлса пăрахрĕç. Совет государстви çĕре ĕмĕрлĕхех колхоза çирĕплетсе пачĕ. Колхозниксем çĕрĕн пултарулăхне тĕпрен хускатса çĕкле пуçларĕç. Çĕр ĕмĕрхи йăвăр ыйăхран вăранчĕ, колхоза тĕлĕнмеле пуйан тупăшсем пара пуçларĕ. Колхозниксем тăватă çул хушши тимлĕн ĕçленипе, пилĕкĕмĕш çулĕнче—1935 çулта çак çĕр гектартан тĕштырă вăтам шутпа 16,8 центнер пачĕ. Нихăçан пулман, нихăçан кĕтмен тупăш! Совет правителстви колхоза пысăк наградăпа паллă турĕ—колхоз председателне Андрей Михайлович Краснова ССР Сойузĕн орденне пачĕ.

Колхоз агротехникăна 1934 çултанпа уйрăмах сарлакан ĕçе кÿрте пуçланă.

Халĕ ĕнтĕ вăраннă Тури Ачак çĕрĕсем ĕлĕкхи 40—50 пăт вырăнне, гектартан тĕштырă вăтам шутпа 120—150 пăт параççĕ (кĕрхи тулă кăçал 150 пăт ытларах тухнă).

Тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре колхоз председателĕ Андрей Михайлович Краснов колхозникçене лайăх йертсе пычĕ. Вăл пур ĕçе те тĕплĕн шухăшласа тăват, хăй пĕлменнисене кĕнекесем çинче шыраса тупат, вăтă колхозниксенчен ыйтса пĕлет. Унăн кăмăлĕ уçă, унпа ĕçлеме те çăмăл.

V. Халăх ăна шанат

Андрей Михайлович хуçалăх тавра çаврăнса килсе, правленине кĕчĕ. Кунта вăл тÿрех Андрейева учотчица патне пычĕ те ыйтрĕ.

— Ну мĕнле? Васкас пулат, вăхăт иртет.

Комсомолкă Андрейова (вăл нумай пулмаст комсомолăн облăçри вунтăваттămĕш конференцинче пулнă, унта ăна Андрей Михайлович Красновпа иккĕшне Обкомол членне суйланă) председателе тырă валеçмели ведăмăç çак кунсенчех хатĕр пулассине пĕлтерчĕ. Андрей Михайлович хăйĕн кабинетне кĕрсе кайрĕ. Вăхăт вунпĕр сехет. Ĕнер каç килнĕ почтăна пăхса тухма ĕлкĕреймен-ха. Пухусем нумай. Акă сĕтел çинче çĕнĕ „Правда" выртат.

Вуникĕ сехет çитиччен каç килнĕ почтăна пăхса тухмалах. Унсăрăн чун канмаст. Кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа икĕ сехетчен, Андрей Михайлович кĕнекепе тетрат тытса ларат. Ку йĕрке унăн нихăçан та — хĕлле те, çулла та пăсăлмаст. Краснов большевизăма тата агротехникăна вĕренет. Килте çулĕх çинче йĕркерен Ленин томĕсем, Сталин, Маркс—Енгелс кĕнекисем тăраççĕ. Тĕнче наукин крепăçне илмелех, мĕншĕн тесен, Краснова парти çапла хушат.

Чăн та, вуникĕ сехет тĕлнеле Андрей Михайлович хаçатсене пăхса тухса, хăйĕн курсне малала тытат. Пÿлĕме ку вăхăтра ун патне никам та кĕрекен çук. Счетоводсем апата кайаççĕ. Правленине килекен колхозниксемпе Красновăн шанчăклă заместителĕ Максимов ĕç тытат.

1929—33 çулсенче Краснов Йетĕрнери спирт заводĕнче ĕçлет, малтан производствă заведуйушчийĕ, унтан—партком секретарĕ. Парти членĕнче вăл 1931 çултанпа тăрат. Заводран районри парти организацийĕ Краснов йулташа татах йалта ĕçлеме мобилизацилет. 1933—1934 çулсенче вăл—Шăмат йалсовечĕн председателĕ. 1934 çулхи çуркунне ăна Тури Ачакри йухăна пуçланă колхоза çирĕплетме йараççĕ. Унтанпа акă тăваттăмĕш çул ĕнтĕ вăл „Крестьянская газета" колхоз председателĕ пулса ĕçлет.

Аслă пурнăç шкулĕ ăна сулăмлă хăйулăх, çирĕп чĕре, анлă пĕлÿ пачĕ. „Интернационалпа етем йăхĕ чĕрĕлет" тенĕ пирĕн гимнра. Краснов—чăваш ачи — чĕрĕлнĕ етемлĕхĕн представителĕ. Епĕр хамăрăн йурра пайан çĕнтерÿçĕсене мухтавласа йурлатпăр. Пирĕн çĕнтерÿçĕсем хăйсен çивчĕ ăстăнĕпе, хăйсен хурçă аллипе çутçанталăкри мĕн пур стихийăсене парăнтарса планетă çине тĕлĕнмеле улшăнусем кÿреççĕ. Аслă шывсем хăйсен ĕмĕрхи çулĕсене улăштарса, çĕнĕ çулпа кайаççĕ; тинĕссем ,океансем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе, пĕр системă пулса тăраççĕ. Çилçунатлă пултарулăх умĕнче чикĕ çук. Мухтав тени укçала сутăнмаст, „арăслансем" хушшинче валеçĕнмест. Кам халăхшăн, тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕрине парса ĕçлет — вăл мĕн пур халăх умĕнче мухтавлă, чыслă, хисеплĕ. Вĕçевçĕ, коњух, писатĕл, артис, колхоз председателĕ, шахтĕр, сталевар, учител, агроном, врач, дойаркă, бригадир, комбайнер тата ытти çĕр тĕрлĕ ăстаçăсем—пурте вĕсем çĕнĕ Конституци хĕвелĕ айĕнче пĕртан правалă, пурте вĕсем совет гражданĕсен тивлетне хăйсен тÿрĕ кăмăллă ĕçĕсемпе тытса тăраççĕ.

Йетĕрне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председателĕ Андрей Михайлович Краснов, тултан пăхсан, йалти ытти çамрăк çынсенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмаст. Пысăкмар, çăмăл кĕлеткелĕ, тăваткăлрах питлĕ-куçлă. Краснов йулташ хăйне хĕрÿлĕ ĕçпе мухтава кăларчĕ.

...1935 çулăн йулашки кунĕсенче А. М. Краснов пĕр кăвак канвертпа хут татăкĕ илет. Ăна Мускава вăйлă тырпул ăстаçисен канашлăвне кайма чĕнеççĕ. Краснов кирлĕ цифăрсене пухат те—Шупашкара, унтан Мускава тухса кайат. Мускавра вĕсем тĕрлĕрен халăхсен делегачĕсемпе тĕлпулса туслашаççĕ. Тĕрлĕ чĕлхе — пĕр ăнлану. Вĕсене тĕлĕнмеле пысăк двореца вырнаçтараççĕ. Йумахри пек!

Малтанхи каçах делегатсене Аслă Театра илсе кайрĕç. Вырăс искусствин чапĕ — „Евгений Онегин" оперă Андрей Михайловичшăн кăвак хуппи уçăлса хупăннă пек курăнчĕ. Театртан гостиницăна вăл тĕлĕкри пек таврăнчĕ. Кунта, вĕсене уйăрса панă пÿлĕмре—Красновăн йулташĕсем. Вĕсем нумайччен калаçса лараççĕ. Пурнăç çинчен, Мускав çинчен, ыранхи çинчен. Çывăрма выртсан та ыйăх килмест. Айри вĕрçĕнĕ таса простыњ халњ çунă шурă йур пек нăтăртатат. Краснов шухăшлат:—Чăн та епех-ши вăл чăваш ачи, Йетĕрне районĕнчи Тури Ачак çĕвĕçин ывăлĕ? Епĕ-ши ку—Мускавра, çакăн пек чаплă дворецра?


Тепĕр кунне аслă канашлу уçăлчĕ. Андрей Михайлович тĕнчери чи аслă çынна —Сталина курчĕ. Хăйне-хăй манса кайса вăл, пĕтĕм халăхпа пĕрле ура çине тăрса, алă çупрĕ, çулпуçне ырă сунса, чĕререн тав туса, сывлăш çитнĕ таран урра кăшкăрчĕ.

Канашлу иртсе пынă çемĕн Андрей Михайлович Мускава хăнаха пуçланăччĕ, анчах йулашкинчен тата тепĕр событи сиксе тухрĕ—ăна ытти делегатсемпе пĕрлех совет правителстви орден памала тунă. Краснов кунта хăй йатне илтсен, пĕтĕмпех çухалса кайрĕ. Сĕтел патне мĕнле утса çитнине вăл астумаст. Аслă старостă Калинин йулташ Краснов йулташа ыттăнпа çырнă пĕр пĕчĕк тăваткăл йешчĕк тыттарса, аллине хытă чăмăртасан, Красновăн савăннипе куççулĕ тухрĕ...

Йулашки кунсенче Краснов Мускавра хăйса çитрĕ. Вăл метропа кĕрет, пойăс çине ларат, кашни станцăра анса мĕн пур йапаласене хăй куçĕпе пăхса пахалат. Аслă столицă витĕр вăл темиçе хут урлă-пирлĕ тухат, музейсене кĕрет. Комсомол Тĕпкомĕнче пулат, Косарев йулташпа курса калаçат. Вăл Мускавран çĕнĕ вăй, çĕнĕ паттăрлăх, çĕнĕ хăйулăх, çутă орден илсе таврăнат...

Андрей Михайлович унтанпа çак икĕ çул хушшинче тата пысăкрах çитĕнÿсем турĕ. Вăл парти Чăваш Обкомĕпе комсомол Обкомĕн членĕ, партин Йетĕрне райкомĕн членĕ, комсомолта 14 çул, партире 6 çул хушши тăрса халăх умĕнче пысăк шанчăка тухнăскер, колхоз ĕçĕнче, йалта парти линине çирĕп тытса пырат. Йал халăхĕ ун сăмахне йаланах тăнлат, итлет.

Арк. Ĕçхĕл.



Савăнăçлă пурнăçшăн агитацилет

— Комсомол организацийĕ мана ССРС Аслă Советне суйламали участкăри суйлав комиççи членне суйларĕ. Епĕ çак пархатарлă, мухтавлă ĕçе пысăк кăмăлпа пурнăçлатăп,—терĕ Феодор Поњаков хăйне суйлав комиççи членне суйланă чухне.

Федор Поњаков Çĕмĕрлери комбинатра 1934 çултанпа ĕçлет. Унăн тăванĕсем Горький облăçĕнчи Андрусова йалĕнчи колхозра пурнаççĕ. Вĕсен çемйинче 12 çын. Вĕсенчен иккĕшĕ заводсенче ĕçлеççĕ. Аслă ывăлĕ Кузнецк хулинчи машинсем тăвакан заводра техник пулса ĕçлет. Виçĕ ывăлĕ вăтам шкулсенче вĕренеççĕ. Поњаковсен çемйи кăçал иккĕмĕш хут ĕнтĕ государсвăран нумай çемйелĕ майĕпе 3000 тенкĕ укçа илчĕ.

— Манăн атте пире укçа парасси çинчен пĕлсен тĕлĕнсех карĕ: акă пурнăç, хăçан кĕтнĕ епĕ çавна. Çыр Федор, Сталин патнех çыр, манран пысăк тав ту, терĕ мана атте. Атте вăтă пулин те, халĕ колхозра стахановец,—тет Поњаков йулташ.

Федор Поњаков ĕçре маттур ĕçлет. Вăл комбината ĕçлеме кĕрсенех хăй станок патне пыма хăранине халĕ те астăват. Вĕреннĕ çемĕн ÿссе пынă. Стахановец пулнă. Кăçал вара ăна станок патĕнчен ответлăрах ĕçе—комбинатри табељщик пулса ĕçлеме куçарнă. Çав ĕçре ĕçлет вăл халĕ те.

Поњаков — комсомолец ССРС Аслă Советне суйламали Кăмаша трактор çулĕ çинчи участкăри суйлав комиççи членĕ. Вăл хăйĕн хастарлă ĕçĕпе пример кăтартат. Ăна участкăри суйлав комиççи 1, 5, 6-мĕш номĕрлĕ бараксенче пурăнакан суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме уйăрнă. Халĕ кашни кунах çав çуртсене çÿрет, суйлав йĕркисем çинчен, Аслă Совета депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем çинчен суйлавçăсене ăнлантарса парат.

— Калас пулат, хатĕрленÿ ĕçе çителĕклĕ пырат теме çук-ха. Суйлавçăсем хушшинче хĕрÿлĕн ĕçлемеле. Анчах агитаторсем сахал. Парти организацийĕсем ку тĕлĕшпе сахал пулăшаççĕ,—тет Поњаков йулташ.

Пысăк хастарлăхпа ĕçлет Поњаков йулташ участкăра. Вăл Аслă Совета телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракансене, ĕçхалăхĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлекенсене суйлама агитацилет.

Хар. Лисин.

Заводри рабочисен митингĕсем пулса иртрĕç

КАНАШ (хамăр корр.). ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Ф. Горкин йулташран Канашри вагонсем йусакан заводри рабочисем, строителсем тата чукунçул рабочийĕсемпе районти „Хĕрлĕ хĕм", „Мотор", Молотов йачĕпе тăракан, „Красная Чувашия" колхозсенчи колхозниксем Националњнăçсен Советне депутата суйлама Канаш суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтнăччĕ. Хаљ А. Ф. Горкин йулташ хăйĕн килĕшÿне пачĕ.

Çав йатпа вагонсем йусакан заводри пур цехĕнче те рабочисем пысăк митингсем туса иртерчĕç.

Вагон урапиcем йусакан цехри митингра 1-мĕшпе 2 мĕш сменăри рабочисем 70 çын ытла пулчĕç. Рабочисем А. Ф. Горкин йулташ килĕшнине ырласа, Националњнăçсен Советне суйланă чух А. Ф Горкин йулташшăн сасăлатпăр, терĕç. Çакăнпа пĕрлех рабочисем ĕçри производствăлă плана тултарса пырассишĕн кĕрешĕве тухрĕç.

Горкин йулташ телеграммине сÿтсе-йавнă хыççăн, рабочисемпе работницăсем, служăщисем Аслă Совета суйлас кун тĕлне пур çитменлĕхсемпе прорывсене те пĕтерсе, декабĕрĕн 12-мĕшне производствăра пысăк çĕнтерÿсем тунипе тухма сăмах пачĕç. Заводри чи паллă стахановец Фомин йулташ хăйĕн сăмахĕнче малашне те пысăк тухăçлăхпа пахалăхлă ĕçлесе пыма пулса, ытти рабочисене те ăмăртăва чĕнчĕ. Рабочисем чĕнĕве хапăлласа йышăнчĕç, обйазателствăсем илчĕç.

Халĕ илнĕ обйазателствăсене рабочисем ĕçпе пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшаççĕ. Кузнечнăй цех кулленхи ĕç программине тултарса пыракан пулчĕ.

—o★o—

Суйлав кунне производствăлă ÿсĕмсемпе кĕтсе илеççĕ

Тутаркас районĕнчи Жданов йачĕпе тăракан колхоз Аслă Совета суйламали куна производствăлă ÿсĕмсемпе кĕтсе илет. Колхозниксем 1937 çулхи государствă умĕнчи укçа-тенкĕ планне пĕтĕмпех тултарчĕç. Техникăла кулњтурăсене—сÿсне те, вăррисене те парса татрĕç. Аш-какай парас плана çитес ик-виç кун хушшинче пурте пурнăçа кĕртме пулчĕç. Государствăна клевĕр 96 килограм парас вырăнне, 5 центнер ытла парса 6 пин тенкĕ укçа тата 22 центнер ытла тĕш тырă илчĕ.

Колхоз кăçалхи çул ĕçкунне 6 килограм ытла тĕш тырă, çĕрулми, пахча çимĕçсем тата укçан валеçет. Колхозра ĕнесĕр хуçалăх çук. Колхозниксем пуйан та кулњтурăлă çул çине тухрĕç.

Колхозри стахановец Дашков Василий арăмĕпе ĕçлесе 900 ĕçкунĕ тунă. Дашков ĕне ферми пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Ĕçе пит йуратса тăрăшса тăват. Кăçалхи çул вăл 340 пăт тĕш тырă, 225 пăт çĕрулми, 56 пăт пахча çимĕç, 112 пăт улăмпа утă илет. Унсăр пуçне тата укçа чылай илет. Ун пеккисем колхозра татах та пит нумай.

И. Смирнов.

—o✿o—

Коммунис—агитатор

Иван Матвейча Арапусĕнчи ваттисем çеç мар, çамрăксем те лайăх пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм халăхшăн ырă ĕç тума тăрăшат. Обществăлă ĕçре тăрăшса ĕçлет. Хушнă ĕçе пурнăçламанни пулман унăн.

Кăçал вăл агитаторсен курсĕнче лайăх паллăпа вĕренсе тухрĕ. Парти пуçламĕш организаци ăна 3-мĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсене суйлав саккунĕ çинчен вĕрентме çирĕплетрĕ. Вăл ку паха ĕçе тăрăшсах тăват. Занњатисем те активлă иртеççĕ унăн. Занњатисене пыраймаан ваттисем патне киле кайса уйрăмăн ăнлантарса парат.

Иван Матвейч суйлав саккунне ăнлантарас ĕçре 5-мĕш, 8-мĕш бригадăсене пулăшса пырат.

Вăл ĕçре, килте те, урамра та çынсем пухăнса тăнă вырăнсенче суйлав саккунне ăнлантарса пама тăрăшат.

Хаçат-журналсене пĕр сиктермесĕр вуласа пырат. Хăй вуласа пĕлнине йаланах колхозниксене каласа парат. Çавăнпа та ăна колхозниксем йуратаççĕ, тăшман кураймаççĕ. Иван Матвейчăн чи ответлă та чи пысăк ĕмĕчĕ вăл—суйлава лайăх хатĕрленсе ăнăçлă иртересси пулса тăрат.

В. Вишневский.

Шуркка суйлав участкинче

Шуркка йалсовечӗ (Шупашкар р.) ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали куна тӗплӗн хатӗрленсе пырат. Йалсовет суйлавҫӑсен спискине нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче пурне те курӑнмали ҫӗре тухса ҫапрӗ. Суйлавҫӑсене „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ вӗренме кашни вунӑ кил тӑрӑх пӗр кружок организациленӗ. Йалсоветӗнче пӗтӗмпе 34 кружок. Ватӑ ҫынсем ваљљи тата ачалӑ арӑмсем ваљљи уйрӑм кружоксем тунӑ. Кружоксене учителсем, комсомолецсем, кӑҫал Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ красноармейецсем тата активлӑ колхозниксем йертсе пыраҫҫӗ. Ку ӗҫе мӗн пур йал активне хутшӑнтарнӑ. Кунсӑр пуҫне агитаторсем суйлав саккунне ӑнлантарса парас тӗлӗшпе тӗрлӗрен вӑхӑтсемпе усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ. Армансенче, коњухсен ҫурчӗсенче тата ытти вырӑнсенче те пулаҫҫӗ вӗсем. Суйлав кампанийӗ пуҫланнӑранпа Шуркка йалсоветӗнче суйлав саккунне кружоксенче вӗреннисӗр пуҫне, ку ыйтӑва 12 пӗрлешӳлӗ пухусенче сӳтсе-йавнӑ. Кунсӑр пуҫне агитаторсем бригадӑсенче уйрӑм канашлусем туса ирттереҫҫӗ. Суйлавҫӑсем суйлав саккунне вӗренме хаваслансах ҫӳреҫҫӗ.

Суйлав ҫурчӗ Шурккари „Победа“ колхоз правленийӗнче пулат. Кунта суйлав комиҫҫийӗн планӗ тӑрӑх 8 пӳлӗм пулмала. Вӑл пӳлӗмсене йӗркелесе ҫитернӗ те ӗнтӗ. Суйлавҫӑсене ларса ҫырмали сӗтелсем, пукансем кунта ҫителӗклӗ. Ҫавӑн пекех чернил, ручкӑ, карандаш, хут тавраш хатӗрленӗ.

Суйлав комиҫҫийӗ нумайах пулмаст пӗр канашлу туса ирттерчӗ. Комиҫҫи членӗсене кашнинех уйрӑм ӗҫсем парса тухрӗҫ. Халӗ вӗсем хӑйсен ӗҫне тытӑннӑ.

Ватӑ суйлавҫӑсемпе ачалӑ арӑмсене суйлава пыма колхозсенче 12 лаша уйӑрнӑ. Ачалӑ арӑмсене суйлав кунӗ ҫамӑллӑх пултӑр тесе, пӗчӗк ачасем ваљљи йаслӗ пулат. Суйлавҫӑсене кӗтсе лармa уйрӑм ҫурт уйӑрнӑ. Ку ҫурта чечексемпе илемлетеҫҫӗ. Унтах гармоњ, балалайкӑ, гитарӑ, биллиард, шахмӑт, шашкӑ, хаҫат-журнал, т. ыт. те пулаҫҫӗ.

Комсомол организацийӗ суйлав кампанине хастарлӑн хутшӑнчӗ. Кашни комсомолецӑн уйрӑм ӗҫ пур. Вӗсем пурте агитаторсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Агитаторсем хӑйсем суйлав саккунне тӗплӗн пӗлччӗр тесе вӗсемпе уйрӑм занятисем туса ирттереҫҫӗ. Ку таринччен вӗсемпе 12 занятие туса ирттернӗ.

И. Чирков.

Чи пирвайхи хут суйлава хутшӑнат

Сталинла Конституцин 135-мӗш статйи тӑрӑх, пирӗн Сойузри 18 ҫул тултарнӑ граждӑнсем Совета суйлама та, суйланма та пултараҫҫӗ.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗ—историлӗ кун. Ку кун хамӑр ҫӗршывӑн Аслӑ Советне суйлаҫҫӗ. Пинӗ-пинӗпе ҫамрӑксем суйлав урнисем патне чи пирвайхи хут пыраҫҫӗ.

Карпов Иван 18 ҫул тултарчӗ. Вӑл кӑҫал пирвайхи хут суйлава хутшӑнат. Халӗ вӑл Кӳкеҫри вӑтам шкулта 10-мӗш класра вӗренет. Отличник вӑл.

Карповсен ҫемйинче 6 ача. Вӗсем пурте хутла пӗлеҫҫӗ. Чи асли—учител. Виҫҫӗшӗ Кӳкеҫри вӑтам шкула вӗренме ҫӳреҫҫӗ. Карпов Иван 1935 ҫулта комсомол ӗретне кӗнӗ. Комсомол ӗҫӗнче хӑйӗн активлӑхне кӑтартнине кура ӑна пӗлтӗр шкулти комсомол комитечӗн членне суйларӗҫ. Вӑл пионерсем хушшинче вожатӑй пулса ӗҫлет. Унӑн отрйачӗ суйлав саккунне лайӑх вӗренет. Украинӑ Тӗпӗҫтӑвком председателӗн Петровски йулташӑн, вӗренекен ачасем патне чӗнсе ҫырнӑ статйине сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, кашни пионер хӑйӗн ашшӗ-амӑшне суйлав саккунӗ ҫинчен ӑнлантарса пама тытӑннӑ. Пионерсем хут пӗлмен ҫынсене хутла вӗрентме пуҫланӑ. Ашшӗ-амӑшсем суйлава кайсан пионерсем киле ачасем пӑхма йулаҫҫӗ.

— Сталинла Конституци тӑрӑх пулса ирттекен историлӗ суйлава чи пирвайхи хут хутшӑнма тивӗҫлӗ пулнӑшӑн савӑнатӑп. Епӗ ҫак суйлава хамӑн вӗренӳ пахалӑхне тата ытларах ӳстернипе кӗтсе илетӗп. Пур предметсемпе те „отлично“ вӗренсе пырассишӗн тӑрӑшатӑп. Вӗренӳре йулса пыракансене пулӑшатӑп. Аттене-аннене суйлав саккунӗ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса паратӑп,—тет Карпов.

Т. Логинов.

Строителсен клубӗнче

Строителсен Шупашкарти клубӗ 3-мӗш ҫул ӗҫлет ӗнтӗ. Клубра рабочисемпе служӑшчисен пушӑ вӑхӑтне кулђтурлӑ ирттерме пур условисем те пур. Ҫурчӗ пысӑк, ӑшчиккисем илемлӗ. Кӑҫалхи ҫентабӗр уйӑхӗнче клуба ҫӗнӗрен илемлетнӗ. Стенисене шуратнӑ. Чӳречисемпе алӑкӗсем ҫине ҫӗнӗ занавескӑсем ҫакнӑ. Ташламали залра, коридорсенче пысӑк тӗкӗрсем. Йӗритавра пукансем, дивансем, кушеткӑсем лараҫҫӗ. Стена ҫумӗнче плакатсем, лозунгсем, ҫулпуҫсен портречӗсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Хаҫатсем ҫыпӑҫтармали витринӑ тунӑ. Клуб тулашӗнчен те хитре: клуб умне урам йенчен карта тытнӑ, скверӑсем тунӑ.

Стройтрест рабочийӗсемпе служӑшчийӗсем, хула ҫамрӑкӗсем кунта кашни кунах пухӑнаҫҫӗ. Вӗсем кунта кулђтурлӑ канаҫҫӗ, вӑйӑсем выљаҫҫӗ, кӗнекесем вулаҫҫӗ.

Клуб ҫумӗнче 4 библиотекӑ ӗҫлет, вӗсенчен пӗри клубра, иккӗшӗ 1-мӗшпе 2-мӗш номӗрлӗ бараксенче тата тепри гаражра. Вӗсенче мӗн пурӗ 7 пин кӗнеке. Ку библиотекӑсенче йаланах вуласа тӑракансем 235 ҫын.

Рабочисем вуламали зала та нумай ҫӳреҫҫӗ. Унта питӗ нумай хаҫатсем, 22 тӗслӗ журнал килсе тӑраҫҫӗ.

Шашкӑ-шахмӑт, биллиард патӗнчен ҫын таталмаст.

Клуб ҫумӗнче тӗрлӗрен кружоксем организациленӗ.

Драмкружок мӗн клуб уҫӑлнӑранпах ӗҫлет. Кружокра сценӑ ҫинче выљама йуратакан рабочисем 23 ҫын. Акӑ бетонщик Суслин, слесӑр Сорокин, килхуҫи хӗрарӑмӗ М. Успенскайа йулташсем кружокра паллӑ артист шутланаҫҫӗ.

Драмкружок кӑҫал темиҫе спектакљ те лартса панӑ. Ҫак кунсенчех А. Островский ҫырнӑ „Лес“, Шиллер ҫырнӑ „Разбойники“ пйесӑсене лартса пама хатӗрленет.

Чӑваш хорӗнче 33 ҫын тӑрат. Хор клубра харпӑрхӑй пултарулӑхне кӑтартакан вечӗрсем тунӑ, радиофестифалђре тата тӗп театрта чӑваш искусствин вунӑкунлӑхӗнче йурласа панӑ.

Клуб правленийӗ чӑваш хорӗнче йурлакансен шутне 60 ҫынна ҫитерме шутлат. Ҫак кунсенчех вырӑс хорне организацилеҫҫӗ.

Кашни канмали кунах клуба ҫамрӑксем нумай пыраҫҫӗ. Вӗсем ташлама вӗренме ташӑ кружокне ҫӳреҫҫӗ. Кӑҫал 6 группӑ вӗренсе тухнӑ. Кашни группӑрах 40 ҫынран кайа пулман.

Духовой оркестр кружокӗ чылайранпа ӗҫлет. Унта 13 ҫын. Ҫитес кунсенчех хӗлӗхлӗ оркестрпа шавлӑ оркестр организацилеҫҫӗ. Инструментсене илсе хатӗрленӗ.

Клубра уйӑхра 12 хутчен кино кӑтартаҫҫӗ. Уйӑхра 5 хут кӑнтӑрла ачасен сеансӗ пулса иртет.

Комсомол вӗренӳвӗпе парти вӗренӳвӗн шкулӗсем ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Хут пӗлмен ҫынсене вӗрентме 2 шкул, хут сахал пӗлекенсене вӗрентме 2 шкул организациленӗ. Ку шкулсенче вӗрентекен учителсем ытти ҫӗрте ӗҫлемеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та шкулсенче занятисем йӗркелӗ пулса ирттеҫҫӗ. Хӗрарӑмсене клуба ҫӳреме аякра тесе пӗр шкулӗ 2-мӗш номӗрлӗ баракри хӗрлӗ кӗтесре ӗҫлет.

Кулленхи политикӑна вӗренсе пыма бараксенче 33 кружок организациленӗ. Вӑл кружоксенче „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положени“ ҫинчен вӗренеҫҫӗ. Аслӑ Октабӗр револљуци уйавӗ умӗн ССР Сойузӗн 20 ҫул хушшинчи ҫитӗнӳвӗсем ҫинчен лекцисем вуласа панӑ.

Тӗнчери лару-тӑру ҫинчен тата аслӑлӑх ҫинчен IV-мӗш кварталта клубра 11 хутчен лекци пулса ирттмеле.

Клуб правленийӗ ӗҫ планӗ туса хатӗрленӗ. План лайӑх пурнӑҫа кӗрсе пырат.

Халђхи вӑхӑтра клуб ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали куна—декабӗрӗн 12-мӗшне хатӗрленет. Лозунгсем ҫыраҫҫӗ. Сасӑламали пӳлӗмсем тӑваҫҫӗ. Пӗтӗмпе 12 пӳлӗм пулат. Парикмахерски пур, буфет ӗҫлет.

Ваља Андрейева.

Суту-илӳ организацисен хускалмала

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали куна хатӗрленес тӗлӗшпе районри суту-илӳ организацийӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксем суйлав кунӗсенче хӑйсен килӗсене илемлетме, вӑл ӗмӗрӗпе ӗмӗтленсе кӗтсе илнӗ аслӑ уйава пысӑк савӑнӑҫлӑхпа ирттерсе йама темӗн тӗрлӗ таварсем ыйтаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Чутайри тата йалсенчи лавкасенче колхозниксем ыйтакан таварсем ҫителӗклӗ мар. Кулђтмагра Сталинла Конституци, „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положении“, ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлас ыйтупа кӑларнӑ тата ытти кӗнекесене те туйанма ҫук. Вӗсене кӳрсе килмен.

М. Бељаковский.



Октабӗрӗн 22-мӗшӗнче Ухтомски суйлав округне кӗрекен йалхуҫалӑх машинисем тӑвакан Љуберецки заводра Сойуз Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратнӑ йатпа (Мускав облаҫӗ) рабочисен, служӑшчисен тата инженерла-техникла работниксен нумай пинлӗ митингӗ пулса иртнӗ.

Сойуз Советне депутата суйлама пурте пӗр саслӑн Совет Сойузӗн Геройне Молоков йулташа тӑратнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: сасӑланӑ вӑхӑт.

Д. Фавилович фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

ДЖАМБУЛ

Казахстан халӑх поечӗ, орденоносец.

Сталинла Аслӑ Саккун

Ман йуррӑм, вӗҫсем, аултан аула.
Уй-хирӗмсем, итлӗр акын Джамбула!

Нумай саккун пӗлнӗ ман вӑрӑм кунҫулӑм,
Ҫавсем авнипе курпунланнӑ хул-ҫурӑм,
Ҫавсем йӗртнипе куҫҫуљ шывла йухнӑ,
Ҫавсен карчӗсем ҫамка ҫине йулнӑ.

Ҫав-ҫав саккунсем—аллахӑн, Аблайӑн,
Ҫав-ҫав саккунсем—палач Николайӑн.

Ҫавсен саккуњпе ачапчасӑр хӑварнӑ,
Ҫавсен саккуњпе—вӗлернӗ, ҫактарнӑ;
Хӗрсем сутӑнатчӗҫ выљӑх-чӗрлӗх пек,
Йалсем сайралатчӗҫ—ҫавсен саккуњпех,
Ҫавсен саккуњпе байсем самӑрланнӑ,
Ӗҫхалӑх ӗнсийӗ ҫинче кӳпсе ларнӑ;
Ҫӳретчӗ ун чух, тискер ҫавра-ҫилӗн,—
Правасӑрлӑх, выҫлӑх, чӗрвилӗм.

Ей, йуррӑм, вӗҫсем аултан аула.
Уй-хирӗмсем, итлӗр акын Джамбула!

Кӑшт ҫеҫ сукмакран аслӑ ҫул ҫуралат,
Тинӗс тени—ҫӑлсенчен пуҫтарнат.
Чулсен хушшинчен пиҫӗ хурҫӑ тухат,
Халӑхри ӑс сӑмахран ҫуралат.
Хавас пурнӑҫран ҫуралаҫ ачасем—
Ҫак ҫут тӗнчере чи савнӑҫлисем,
Пӗрлех вӗсемпе ҫуралаҫ йурӑсем,
Колхоз йуррисем—чи-чи хитрисем.

Йантрат ес, тумра, колхоза, аула,
Уй-хирӗмсем, итлӗр акын Джамбула!

Итле, Каракол, Кастек, Каркален,
Совет саккунне мухтап еп, хисеплеп!
Чӑн ҫак саккунпа хаваслӑх килет,
Чӑн ҫак саккунпа уй-хир ҫимӗҫленет,
Чӑн ҫак саккунпа йурлат чун-чӗре,
Чӑн ҫак саккунпа ҫамрӑклӑх ҫеҫкере,
Чӑн ҫак саккунпа ӗҫлет ҫутҫанталӑк
Ӗҫхалӑх хисепшӗн ӗмӗр мухтанмалӑх.

Чӑн ҫак саккунпа сире, йӗкӗтсем,
Чи паттӑр ӗҫсемшӗн йар усӑ ҫулсем.

Чӑн ҫак саккунпа кайаҫ вӗренме
Аул ачисем столицӑсене.

Чӑн ҫак саккунпа пӗр тан, пӗр тӑван
Ирӗклӗ ҫӗршывлӑ республиксем ман.

Йурлар, акынсем! Сас кайтӑр инҫен!
Йурлар Сталинла Конституци ҫинчен!
Епир савӑнмалӑх, тӑшман макӑрмалӑх—
Тӑванлӑн пӗрлешнӗ мӗнпур аслӑ халӑх.
Кайар, акынсем, аулсен пуххине,
Йурлар ӗҫпеле ҫӗнтерӳ йуррине!
Пире йурламалӑх, пире савӑнмалӑх—
Советӑн ҫӗршывӗ—чечеклӗ тӑванлӑх!
Хӑй аслӑ чӗрийӗн ӑшши-хӑватне
Чӑн пачӗ пире Аслӑ Сталин—атте!

Вырӑсларан Митта Петӗрӗ куҫарнӑ.

Районри хӗрсен сљочӗ

ТӐВАЙ. Нойабӗрӗн 10-мӗшӗнче районри хӗрсен сљочӗ пулса иртрӗ. Сљота 250 хӗр ытла пухӑннӑ. Сљотра ПСК(б)П райком секретарӗ Йарандайкин йулташ ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленесси тата хӗрарӑмсен ӗлӗкхи хӗн-хурлӑ пурнӑҫӗпе халђхи телейлӗ пурнӑҫ ҫинчен доклад туса пачӗ. Доклад тӑрӑх тухса калаҫакансем нумай пулчӗҫ. Уљанкӑри А. Йефремова комсомолкӑ хӗрӳлӗ сӑмах тухса каларӗ.

— Халђ епӗр телейлӗрен те телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр, — тет вӑл. Акӑ халӗ Аслӑ Совета суйламали вӑхӑт ҫывхарса килет. Епӗр суйлава лайӑх хатӗрленетпӗр. Йалти участкӑра агитатӑрсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ку ӗҫе учителсене, комсомолецсене, коммуниссене тата ыттисене те хутшӑнтарнӑ. Вӗсем ернере 2 хут занятие туса ирттереҫҫӗ. Ҫавӑн пекех коњухсене, ача амӑшӗсене ӑрасна вӗрентеҫҫӗ.

Кириллова йулташ хӗрсем пысӑк машинӑсемпе ӗҫлени ҫинчен калат.

— Епӗ хӗрарӑм тракторискӑсен бригадин бригадирӗ пулса ӗҫлетӗп, — тет вӑл.—Пире малтанах шанмасчӗҫ. Епӗр, хӗрсем, арҫынсенчен мала тухрӑмӑр. Планпа кашни тракторисӑн 620 гектар сухаламала пулнӑ пулсан, Йермолайева — 986 гектар, Порфирйева — 988 гектар сухаларӗҫ.

Пирӗн кӑҫал тракторсем пӗри те нимӗн те ванман, пурте йусавлӑ. Колхозсенче пирӗн ӗҫсене йаланах „лайӑх“ пахалӑхпа йышӑннӑ.

Илйина й. Елпуҫӗнче суйлав саккунне вӗренни ҫинчен каласа парат. 4 бригадӑра кашнинчех агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ. Йединоличниксем хушшинче те ӗҫе аван организациленӗ. Вӗсем патне кашни каҫ тенӗ пекех килне кайса суйлав Положенине вӗрентеҫҫӗ. Хӗрсенчен хор кружокӗ организациленӗ. Хор хӑйӗн пултарулӑхне Октабӗр револљуци 20 ҫул тултарнӑ праҫникре лайӑх кӑтартрӗ. Ҫавнашкалах драмкружок та аван ӗҫлет, спектакљсем час-часах пулаҫҫӗ. Ӗлӗк Елпуҫӗнче 61 процент трахомлӑ пулнӑ, 1937 ҫулта 6 проц. кӑна йулнӑ. Ҫаксем пӗтӗмпех хӗрсем тӑрӑшса ӗҫленипе, трахом чирӗпе кӗрешме ҫителӗклӗ кадрсем хатӗрленипе пулнӑ.

Тухса калакансем пурте ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленессипе ҫине тӑрса ӗҫлеме пулчӗҫ. Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче—суйлав кунӗнче — тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсемпе хӗрӗсене, халӑх телейӗшӗн тӑрӑшакансене, клас тӑшманӗсемпе пӗр хӗрхенмесӗр кӗрешекенсене Аслӑ Совета суйлама вӗсемпӗн сасӑлама сӑмах пачӗҫ.

Ал. Пикишкин.

10.000 кирпӗч тӑвакан аластаҫсем

ВӐРМАР. Аслӑ Чакри аласта ертелӗнче йулашки ҫулсенче нумай стахановецсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. 1927 ҫултанпа ертел членӗнче тӑракан Николай Трофимов йулташ ҫуллен 5.000 кирпӗч тӑвас вырӑнне 10.000 кирпӗч туса пырат. Стахановла ӗҫлеме тытӑннӑранпа вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗн сӑн-сӑпатне тӗпренех лайӑхлатрӗ. 1936 ҫулта ҫӗнӗ пӳрт лартрӗ. Кашни ҫулах хаҫатсем ҫырӑнса илсе тӑрат. Сӑмавар, хуткупӑс, ҫӗвӗ ҫӗлемели машинӑ илнӗ.

Ҫавӑн пекех Федоров стахановец та ҫуллен 10.000 кирпӗчрен кайа тумаст. Вӑл кирпӗч тунӑ ҫӗрте ӗҫлеме тытӑннӑранпа ҫӗнӗрен пӳрт лартрӗ. Ӗне илчӗ, т. ыт. выљӑх-чӗрлӗхсем усрама тытӑнчӗ. Унӑн ачисем лайӑх пурнӑҫпа ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ.

Халӗ Трофимовпа Федоров Аслӑ Совета суйлама хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем суйлав кунӗ тӗлне производствӑра тата пысӑк ӳсӗм тӑвассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах суйлав Положенине вӗренмели кружока ҫӳреҫҫӗ.

В. Андрийанов.

Ӳсӗмлӗ фермӑра

Пазаркассинчи (Ҫӗрпӳ р-нӗ) „Красная Бавария“ колхозӑн сысна ферми 6 ҫул хушшинче сыснасен хисепне ӳстерес, вӗсен ӑратне лайӑхлатас тӗлӗшпе чылай ӳсӗмсем тунӑ. Выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели государствӑ планне фермӑ ҫулленех ӑнӑҫлӑн тултарса пынӑ. 1937 ҫулта аш-какай памали государствӑ планне 100 проценчӗпех тултарса, 1938 ҫулшӑн та чылай панӑ. План тӑрӑх кӑҫал фермӑра 178 сысна, вӗсенчен 42 ама пулмала. Халӗ 253 сысна, вӗсенчен 57 ама шутланат. Сысна ҫурисем—196. Колхозниксем пурте сысна усраҫҫӗ. Кӑҫал колхозниксене памашкӑн тата 75 сысна ҫури палӑртнӑ. Сыснасене пӗтӗмпех ӑратлантарнӑ. Хӑшпӗр сыснасем 250—300 килограм тайаҫҫӗ. Фермӑ пуҫлӑхӗ Быркин Николай тӑрӑшса ӗҫлет.

Сысна ҫурисене ӗне сӗчӗ ӗҫтереҫҫӗ. Фермӑн хӑйӗн пӗр ӗне пур. Сысна ферминче стахановла ӗҫлесси сарӑлса парат. Акӑ, Йемелйанов Николай колхозник паллӑ ударник шутланат. Вӑл пӑхакан сыснасем уйрӑмах мӑнтӑр. Сысна ҫурисем хӑвӑрттӑн ҫитӗнсе пыраҫҫӗ. Амисене пурне те чуптарса хӑварнӑ.

Н. Йефимов.

Пулӑ ӗрчетеҫҫӗ

СӖНТӖРВАРРИ. Пысӑк пӗвесем пӗвелеме кӑҫал районри колхозсене государствӑ чылай пулӑшу пачӗ. Шӗнерпуҫӗнчи „Муравейник“ колхоза 8 пин, Кив Тукайри „Хурҫӑ“ колхоза—2 пин, Чӗнерти „Стрела“ колхоза 7 пин, Мӗшӗлти „Туйташ“ колхоза 5 пин, Ҫимагайӗнчи „Бољшевик“ колхоза 6 пин тенкӗ укҫа панӑ. Ҫуллахи вӑхӑтра ҫак колхозсем пурте пысӑк пӗвесем пӗвелерӗҫ. Тата Ҫичӗ Пӳртри „Паскав“ колхоз хӑйӗн вӑйӗпе 3 пысӑк пӗве пӗвеленӗ. Ку пӗвесене пурне те ҫурхи шыв нихҫан та ватмала мар ҫирӗп тунӑ. Халӗ колхозсем ҫак пӗвесенче пулӑ ӗрчетме пуҫларӗҫ.

В. Васлийев.

375 пӑт тырӑ, 2 пин тенкӗ укҫа

Акшикри „Паттӑр“ колхоз (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) агротехникӑ кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе ӗҫленипе кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илчӗ. Кунта ӗҫкунӗ ҫине 2-шер тенкӗ укҫа, 6-шер килограм тырӑ валеҫеҫҫӗ. Колхозри стахановец Иван Йегоров ҫемйи 1000 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӑл кӑҫал 375 пӑт тырӑ, 2 пин тенкӗ укҫа, ҫӗрулмипе ытти ҫимӗҫсене те нумай илет.

В. В.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителстви

Ҫӗмӗрлепе Шӑнкӑртам районӗсем пӗр вырӑнтах тапӑртатаҫҫӗ

Лини хывакан бригадӑсем нойабӗрӗн 17—19-мӗшӗсенче 1430 метр хушшинче ређсӑсем сарса лини тӑршшӗне 16,8 километра ҫитерчӗҫ. Чукунҫул линийӗ шоссе ҫулӗ урлӑ тата 86 ш километрти труба урлӑ каҫрӗ. Халӗ 81 мӗш километрти труба патне ҫитиччен лини хывма ҫул уҫӑ.

Анчах 81-мӗш километрти труба ҫине тӑпра тултарасси йерипен пырат. Кунашкал пулни Ҫӗмӗрлепе Шӑнкӑртам районӗсем чукунҫул ҫинче ӗҫлеме ӗҫ вӑйӗ организацилеменнинчӗн килет. Вӑл районсенчен ӗҫлекенсем питех те сахал. Шӑхасанпа Тӑвай районӗсем те чӑтма ҫук начар ӗҫлеҫҫӗ. Ку районсенчен нойабӗрӗн 17—18-мӗшӗсенче пӗр ҫын та ӗҫлемен.

Нойабӗрӗн 18-мӗшӗнче Ҫӗрпӳ районӗнчен ӗҫлекенсем нумай пычӗҫ. Ку районран халӗ ҫуранҫисем 1028 ҫын, лашалисем 320 ҫын ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрлӗ Чутай районӗ пулӑшу йӗркипе хутшӑнса ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Часах 74-мӗш километрти труба ҫине тӑпра тултарса ҫитереҫҫӗ. Унта ӗҫлекенсене 81-мӗш километрти труба патӗнче ӗҫлеме мобилизацилемеле.

Комсомол Обкомӗ те кирлӗ пек ӗҫлеме тытӑнман-ха. Комсомолецсене ређсӑсем сарнӑ ҫӗрте ӗҫлеме мобилизацилеме пулса илнӗ обйазателствӑна халӗ те пурнӑҫламан. Ку питех те килӗшӳсӗр.

Ређсӑсем хывас ӗҫе хӑвӑрттӑн пурнӑҫа кӗртсе пыма пур кирлӗ условисем те пур вӑхӑтрах ҫакнашкал ҫӳрӗккӗн ӗҫлени районти организацисем ҫине тӑрса ӗҫлеменнинчен килет. Вӑхӑт кӗтмест. Пур районсен те чукунҫул тунӑ ҫӗре ӗҫлеме колхозниксене массӑлӑн организацилемеле.

Ҫакна ӑнланса илмеле: кӑҫал чукунҫула туса пӗтерейменни пирӗн республикӑ промышленнӑҫ тӗлӗшӗпе ӳсессине нумай ҫуллӑха тытса тӑма пултарат.

Чукунҫул тума

Шурҫырма йалсоветне кӗрекен колхозсем (Трак р.) чукунҫулне суйлав кунӗ тӗлне туса пӗтерессишӗн кӗрешме строителствӑна йышлӑн тухма пуҫларӗҫ. „Майӑн 1-мӗш“ колхозран 70 ҫынран бригадӑ организацилесе тухнӑ. Ҫавнашкалах Йуркин йачӗпе тӑракан колхозран 18 колхозник 6 лашапа ӗҫлеме тухрӗҫ.

Ф. Миронов.

Почтӑ ҫав-ҫавах ӗҫлемест

ҪӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Почтӑ уйрӑмӗнче ӗҫлекенсемшӗн граждӑнсен жалобисем нимӗн те мар.

Комбинатпа „Бољшевик“ завод ҫумӗнчи почтӑ агенствисене кашни кун темиҫе ҫын пырса тухат. Хӑшӗсем ҫырӑннӑ хаҫатсене паманшӑн, теприсем ҫырусене, почтӑ урлӑ килнӗ укҫасене час паманшӑн, йе ҫухатнӑшӑн вӑрҫаҫҫӗ.

Райӗҫтӑвкомра ӗҫлекен П. Иванов йулташ нойабӗршӗн „Красная Чувашия“ хаҫат ҫырӑннӑ пулнӑ. 10 кун хушшинче те ӑна пӗр номӗр паман. Нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче почтӑна кайса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, комбинатри почтӑ агенстви ун карточкине ҫухатни палӑрнӑ. Ҫавӑн пекех комбинатра ӗҫлекен Толстов йулташ „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫат вырӑнне, хӑш чухне „Красная Чувашия“, тепӗр чухне тата урӑх хаҫат илсе тӑнӑ т. ыт. те.

Кун пек фактӑсем сахал мар. ССРС Аслӑ Советне суйлама хатӗрленнӗ май, почтаљйонсен кашни кун подписчиксем патне икшер хут хаҫатсем, ҫырусем пырса памала. Анчах комбината тепӗр чух пӗрте пырса куранмаҫҫӗ. Час-часах ирхине илмели хаҫатсене каҫхине 4—5 сехетре ҫеҫ пырса параҫҫӗ. Парти райкомӗ нойабӗрӗн 7-мӗшӗнче тухнӑ „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫата нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче те илсе вулайман, почтаљйонсем пырса паман. Ҫак хаҫатах хӑшӗсем 8-мӗшенчех илсе вуланӑ.

Комбинатпа „Бољшевик“ завод ҫумӗнчи агенствӑсенче ӗҫлекенсенчен нихӑшӗ те пӗр екземпљар хаҫат сарман.

Телефонпа калаҫас пулсан 3—4 сехет хушши лармала. Телефонисткӑсем (Романовӑпа Красилникова) хӑйсем мӗнле ӗҫлес тенӗ, ҫавӑн пек ӗҫлеҫҫӗ.

Почтӑ начаљникӗ Власов ҫак ҫитменлӗхсене куратӑркаҫах ӗҫе йусамасӗр чӑсса пырат. Рабочисемпе пухусем, канашлусем те туса ирттермест. Профсойузпа комсомол организацисем пачах ӗҫлеме пӑрахнӑ. Почтӑра ӗҫлекенсем 50 ҫынна йахӑн пулин те, ку таранччен „ССРС Аслӑ Советне суйламали Положени“ ҫинчен вӗренме пуҫӑнман.

Х. Л.

Испанири коммунисла партин Тĕп Комитечĕн пленумĕ пĕрлĕх ыйтăвĕ çинчен

БАРСЕЛОНĂ, нойабĕрĕн 19-мĕш (ТАСС). Испанири коммунисла парти Тĕп Комитечĕн пленумĕ çакăн пек пĕлтерӳ кăларнă: „Пленум, социалисла парти секретарĕ Ламонедăн саламлă çырăвĕпе пысăк хавасланса паллашрĕ. Пленум ку çырăва пĕрлĕх патне, рабочи класăн икĕ тăван партине пĕрлештересси патне илсе пыракан, тесе саламлать. Пленум пролетариатăн пĕрлехлĕ партине мĕнле те пулин хăвăртрах тăвассишĕн хĕрӳлĕн çунать, мĕншĕн тесен ку вăл çĕнтерӳ. Çиĕнӳвĕшĕн чи пурнăçла задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Пĕлтерӳре малала, пленум пролетариатăн пĕрлĕхлĕ партине мĕнле те пулин хăвăртрах тăвас шухăша çирĕплетрĕ, тесе паллă тунă. Рабочи класăн пĕрлĕхĕ халăх фронтĕнчи пĕтĕм Испани халăхĕн пĕрлĕхне çирĕплетмели чи хăватлă май пулса тăмала. „Социалисла партин Ĕçтăвакан Комитет тата Ламонеда йачĕпе,—тенĕ пĕлтерӳре,—епĕр социалисла партипе коммунисла партине пĕрлештерессине мĕнле те пулин хăвăртрах пурнăçлассишĕн тăрашакан пĕтĕм социалис йулташсене саламлатпăр“.

Контрреволюционерсем-троцкиссем Барселонăра ирсĕр ĕç тунă

Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче каçхине контрреволюционерсем-троцкиссем Каталонири Пĕтĕм Рабочи Сойузĕн паллă членне Боша амантнă.

Каталонири Пĕтĕм Рабочи Сойузĕн Барселонăра пыракан сиесĕ, Бош çине тапăннине пĕлсен, Каталонири рабочи класа хирĕç çĕнĕрен ирсĕр ĕç тунă фашиссен тӳрĕ агенчĕсене — троцкиссене ылханса резолюци йышăннă.

(ТАСС).

Вылăх-чĕрлĕхе шута илмели Пĕтĕм Сойузри смотра хатĕрленесси

1938 çулхи йанварĕн пĕрремĕшĕнче вылăхсене шута илсе тухмала Пĕтĕм Сойузри перепис вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе иккĕмĕш пиатилеткă планне тултарнине шута илмеле тата виççĕмĕш пиатилеткă валли вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмели план тума кирлĕ материалсем памала. Ку переписре çĕршыври пур лашасен, майракаллă шултра вылăхсен, сыснасен, качакасен тата тĕвесен хисепне тĕрĕс шута илессĕ.

Перепиçе иртерме правителствă ССР Сойузĕнчи Госпланăн халăх хуçалăхне шута илекен Тĕп Управленине хушнă. Вăл переписе иртерме пĕтĕм республикăсенче, крайсемпе облăçсенче йатарласа бюросем тунă. Районра вылăхсене шута илсе тухассипе халăх хуçалăхне шута илекен районри тата участкари инспекторсем ответлă пулаççĕ.

Вылăхсене шута илсе тухас ĕçе хутшăнакансем 100 пине йахăн çын пулать. Кунсăр пуçне, кашни колхозра тата совхозра переписре пулăшса ĕçлеме йатарласа бригадăсем тата шута илекенсен ĕçне тĕрĕслеме йалсоветсен, общчествăла организацисен, колхозсен представителĕсенчен тунă бригадăсем пулаççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вылăхсене шута илсе тухмалли Пĕтĕм Сойузри перепис çинчен постановлени кăларсанах, нумай облăçсенче ку кирлĕ ĕçе лайăх иртерессипе социалисăмла ăмăрту пуçланнă. Алтай крайĕнчи халăх хуçалăхне шута илессипе ĕçлекенсем Новосибирск облăçне, Ленинград облăçне, Свердловск облăçне т. ыт. те социалисăмла ăмăртăва чĕннĕ.

(ТАСС).

Çулталăк планне тултарнă

ГОРЛОВКА, 16/XI (ТАСС). „Артемуголь“ трестан 8-меш номĕрлĕ шахтин коллективĕ енер кăмрак кăлармалли çулталăк планне тултарнă. Вунă уйăх çура хушшинче 180 пин тонна кăмрак кăларнă. Ку шахтăна выдвиженецсем йертсе пыраççĕ: кăмрак кăларас ĕçри мастăр, вата забойщик коммунис Козлов йулташ (шахтă пуçлăхе), участкă начальникĕ пулнă Гонча йулташ (хале шахтăри аслă инженер).

Шахтă коллективĕ çулталăк иртиччен планран ирттерсе 30 пин тонна кăмрăк кăлармалла пулнă.

Пысăк вăй паракан хуранлă паровоз

КОЛОМНА, нойабĕрĕн 18-мĕш (ТАСС). Коломнăри Куйбышев йачĕпе тăракан машинăсем тăвакан заводра пысăк вăй (85—100 атмосферă) паракан хуранлă паровоз тума тытăннă.

Çĕнĕ локомотив хăйĕн конструкцийĕ формипе ытти ахаль паровозсенчен пысăккăн уйрăлса тăрать. Унăн чунпă чухне сывлăш кансĕрлемеле мар тунă кузов пулать. Тендерĕ çук. Пĕтĕм механисăм тата хуран пĕр рамă çинчех вырнаçаççĕ.

Çĕнĕ йышши паровоз хула çывăхĕнче çӳрекен, çынсем лартса çӳремели, тăватă тĕнеллĕ 5—6 вагонлă çăмăл пуйăссене илсе çӳрет. Пройектлă хăвăртлăх—пĕр сехетре 120 километр.

Завод коллективĕ çĕнĕ локомотива ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли кун йачĕпе декабĕрĕн 12-мĕшĕнче туса кăлармалла йышăннă.

Совет Сойузĕ тăрăх

★ **Рабочисем техникă çинчен кĕнекесем çыраççĕ.** Социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнă тĕле Мускаври „Серп и молот“ завод рабочисем 47 çĕнĕ кĕнеке тата брошурă кăларнă. Кĕнеке авторĕсенчен нумайăшĕ вата производственниксем, стахановецсем тата изобретателсем.

★ **Стахановла çĕнтерӳ.** Рйазан облăçĕнчи Муровлянски МТСтанцин 5-мĕш трактор бригади „Сталинец“ тракторпа кашни трактор пуçне 6.000 га сухалама панă обйазателствине ытлашшипех тултарнă. Бригадă 13 тоннă сунтармалли йапала перекетленĕ. Бригадир-комсомолец Паша Пирожков 21,1 тоннă тырă, 9.652 тенкĕ укçан ĕçлесе илнĕ, тракторист-комсомолец Маманов 14 тонн йахăн тырă, 5.800 тенкĕ укçа илнĕ. Бригадăн ытти членĕсем те çакнашкалах пысăк тупăш илнĕ.

★ **Çамрăк хуçайственниксем.** Ленинградри хĕрлĕ йалавлă „Красный треугольник“ заводра 15 пин ытла çамрăк рабочисемпе работницăсем ĕçлеççĕ, вĕсенчен 3 пин çын Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци тантăшĕсем. Заводри çамрăксем йулашки вăхăтра хăйсен ретĕнчен чылай бригадирсем, мастăрсем кăларнă. Заводăн пысăк цехĕсене çамрăк хуçайственниксем Косарев, Литвинов, Гайева йулташсем йертсе пыраççĕ.

★ **„Москва“ гостиницăн 15 хутлă корпусĕ.** Мускавра вунпилĕк хутлă гостиницăн фасачĕсене туса пĕтернĕ. Çĕнĕ корпусра пурĕ 176 номĕр пулать. Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче 61 номĕрĕпе усă курма пуçлаççĕ. Гостиницăн ăшчиккине питĕ лайăх илемлетеççĕ. Зал стенисене тата колоннадăсене искусственнăй мрамăрпа витеççĕ.

★ **Мускаври рынăксене лайăхлатаççĕ.** Çак çул хушшинче Мускав совечĕ рынăксене лайăхлатма 1.700 пин тенкĕ уйăрнă. Колхозлă суту-илӳ валли çĕнĕрен 5 павильйон тăваççĕ. Станционарлă колхозлă суту-илӳ валли çак çул хушшине 50 палаткă ытлашшипех тунă.

★ **Одессăра—Пушкин музейĕ.** Одессăри Пушкин урамĕнче 1823 çулта А. С. Пушкин пурăннă çуртра музей уçаççĕ.

★ **Мандаринсем пысăк тухăçлă пулнă.** Грузири совхозсемпе колхозсенче мандарин, лимон тата апельсин тухăçĕсем кăçал питĕ лайăх пулнă. Колхозсемпе совхозсем кăçал государствăна 280 мĕлйун штук мандарин сутаççĕ, пĕлтĕрхинчен 102 мĕлйун ытларах.

Рабфак хорĕ

Шупашкарти педагогикă рабфакĕнчи хора 1935 çултах организациленĕ. Халĕхи вăхăтра хорта 43 çын тăрать. Вĕсенчен ватăрĕшĕ—хĕрачасем. Занятисем план тăрăх, вăхăтра пулса пыраççĕ. Хор рабфак вечĕрĕсенче çеç мар, тата пединститутри вечĕрсенче те туха-туха йурлать. Шефа илнĕ Кĕçĕн Карачура йалне (Шупашкар районĕ) кайса вечĕрсем туса парать. Колхозниксем рабфак хорне хытă мухтаççĕ, час-часах пыма сĕнеççĕ.

Иртнĕ çулта рабфак хорĕ чăваш радиостанци урлă виçĕ хутчен тухса йурларĕ. Çывăх кунсенчех радиостанци урлă йурлăса пама хатĕрленетпĕр.

Ф. Галкин.

Пединститутри литературă кружокĕ

Шупашкарти пединститут çумĕнчи литературă кружокĕнче 83 çын тăрать. Кружокăн виçĕ секци: критикă секцийĕ, творчествă секцийĕ тата Пушкин секцийĕ. Ку таринччен „Шолохов тата социалисăмлă реалисăм“, „Авербаховщинă“ темăсемпе занятисем иртернĕ. Кружокра институтри „поетсен“ — Кăтра Мишшапа Алкан сийенле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă.

Пĕрре литературă вечĕрĕ тунă, унта Радищчев творчестви çинчен доклад итленĕ. Совет литератури 20 çул тултарнă май, литкружок членĕсем нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче вечĕр тума хатĕрленеççĕ.

К. Лазарев.

Вăрнар районĕнчи „Комсомолец“ колхозри бригадир табаковод А. Йегоров йулташăн ĕлĕкхипе халĕхи пӳрчĕ.

(фото Цыгановăн).

Тырпулпа тупăшсене валеçме васкамаççĕ

ШĂХАСАН (хамăр корр.). Халĕ ĕнтĕ йалхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçлесе çитернĕ хыççăн, колхозсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл—тырпулсемпе тупăшсене колхозниксем хушшинче пĕр йанăшсăр, ĕçкунĕсем тăрăх тĕрĕс валеçсе парасси пулать.

Кăçал Шăхасан районĕнчи машинпа трактор станцине кĕрекен колхозсем халиччен пулман вăйлă тырпул турĕç. Пур культурăсем тăрăх та ватамран шутласан гектартан 17 центнер тухăç илчĕç. Уйрăмăнах, Атнашри Киров йачĕпе тăракан, Йамашри „Ударник“, Анат Сурăмри „Красное Сормово“ колхозсем районра чи вăйлă тырпул тухăçĕ туса илме пултарнине кăтартрĕç. „Ударник“ колхозри колхозниксем кăçал ĕçкунĕ пуçне 12 килограм, Киров йачĕпе тăракан тата „Красное Сормово“ колхозсем 8-шар килограм тырпул валеçеççĕ. Çапла вара колхозри ударник-стахановецсем кĕлет тулли тырпуллă пулаççĕ. Киров йачĕпе тăракан колхозри Ларионов Петр, Йаковлев Йĕмелйан колхозниксен семйисем кăçал 600 пăт ытла тырпул илеççĕ. Ĕлĕк вĕсем чухăн çын пулнă, çакăн чухлĕ тырпул туса илессе ĕмĕтленмен. Çавăнпа кăçалхи вăйлă тырпулшăн хĕпĕртесе саванаççĕ. Вĕсем çав тырпула часрах хăйсен пӳлмисене кĕртсе хăйсене кирлĕ пек усă курасшăн, пуйан та культурăллă пурăнма тытăнасшăн. Анчах райçĕрĕç пайĕпе МТС тата колхоз руководителĕсемпе ревизи комиççисем колхозниксем ыйтакан хăстарлăха туймаççĕ. Тырпулсемпе тупăшсене валеçме хатĕрленесси начар пырать. Районри 67 колхозран çак вăхăтчен пĕри те тырпулсене валеçмели плана тĕплĕ туса çирĕплетмен.

Ĕç мĕншĕн тытăнса тăрать? Паллах, вăрлăхпа страхфонд, фураж фончĕсем хывассипе ĕç чарăнмасть. Весене пур колхозсем те хывнă ĕнтĕ. Чылай колхозсем вăрлăхлăх хăварнă тырăсене шăтарса сăнама тытăнчĕç. Апла пулсан, сăлтавĕ мĕнре? Айăпĕ пĕтĕмĕшпех колхоз правленисемпе ревизи комиççисем çак ответлă ĕçе иртерессине хаклămасăр ĕçре васкаманнинчен килсе тухать. Çак таранччен Ĕнтрийалĕнчи, Анат Сурăмри колхозсенче çеç ревизи туса пĕтернĕ. 17 колхозра аван çапса пĕтермен. Чылай çĕрте мĕшелтетсе ĕçлес йăла пур. Колхозниксен ĕçкĕнекисем çине ĕçкунĕсене пурне те вăхăтра ларттарса тухмасăр çухатса пĕтернĕ тĕслĕхсем тупăнаççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе ревизи комиççисем саланса кайнипе ĕçе чăрмантарса пынă. Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозра 1936 çулхи 4-мĕш кварталшăн ревизи туса пĕтермен, çавăн пекех 1937 çулшăн пĕр ревизи те пулман. Ревизи комиççи председателĕ пулнă В. Сергейев ĕçе арçатса колхоза йухăнтарас шутпа урăх çĕре ĕçе кĕнĕ. Çапла вара кунта йалхуçалăх уставне пăсса ĕçленĕ. Çакăн çинчен районри организацисем пĕлмен мар, анчах нимĕн те туман.

Çак сăлтавсене пула ĕнтĕ тырпулсене валеçмели плана туса çирĕплетесси хăй телĕн пулса пырать.

Çĕнĕ строителствăсем

Кĕленче посудăсем тăвакан завод

Чувашпромсойуз системи тăрăх кĕленче посудăсем тăвакан завод лартас плана çирĕплетнĕ. Завод Атăлăн сулахай йенче, Шупашкар тĕлĕнче пулать. Халĕхи вăхăтра завода аслăлатса пысăклатас тĕлĕшпе пройектсене тепĕр хут пăхса тухаççĕ.

Ку завода тунă çĕре 3 мĕлйун тенке йахăн укçа хываççĕ. Завода 1938 çулта хута кĕртмеле.

Завод çулталăкра 0,5 литр кĕрекен посудăсем 2 мĕлйун та 108 пин штук, 0,6 литр кĕрекен посудăсем 1054 пин штук, 100, 200, 300 грамм кĕрекен аптекăра кирлĕ посудăсем 2.806 000 штук тата ытти вак-тĕвек посудăсем 10.000.000 штук кăларакан пулать. Заводра посудăсем тăвакан пысăк механизăмсем лартаççĕ.

Черепицă тăвакан завод

Вăрмар районĕнчи Аслă Чакри ертелре черепицă тăвас ĕçе 1933 çултах организациленĕ. Анчах ку тарана çитиччен пур ĕççене те алпах тунă.

Черепицă тăвас ĕçе механизацилеме ертел завод лартать. Завода 1938 çулта хута кĕртмеле. Ку заводра 30 çын ытла ĕçлемеле пулать. Халĕхи вăхăтра завод строителствинче хĕрӳллĕ ĕç пырать.

В. Андрианов.

Тракторсене йусама тытăнчĕç

ШĂХАСАН (хамăр корр.). Машинпа трактор станци хăйĕн тракторĕсене йусама тытăнчĕ. Пурĕ 23 трактора капиталнăй ремонт тумала.

Ку таранччен тракторсене йусакан мастерскойĕнче 7 трактора йусама тытăннă. Тракторсене йусас ĕçре 15 тракторис ĕçлет. Кăçал кашни трактор бригадин бригадирĕ, уйрăм трактористсем хăйсен тракторĕсене ремонтлассишĕн ответлă пулса тăраççĕ.

План тăрăх тракторсемпе йалхуçалăх машинĕсене мартăн 1-мĕшне йусаса пĕтермеле пулсан, Шăхасанти машинпа тракторлă станци февралĕн 1-мĕшне йусаса пĕтерме обйазателствă илчĕ. Çак обйазателствăна пурнăçлама кунта пур условисем те пур. Запаслă пайсене тупса хатĕрленĕ, анчах бабит, тата 1200 маркăлă под шибниксем çителĕклĕ мар-ха.

Йусав ĕçĕнче ĕçлекен трактористсене тухăçлă ĕç условийĕ туса параççĕ. Общежити пур. Çак кунсенче столовăй уçма палăртнă.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

Грачева айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă

Ку заметкăра Николайев йулташ Кармамири Чапайев йачĕпе тăракан (Канаш р-нĕ) колхозри бригадир Грачев колхоз пурлăхне йухăнтарни, колхозниксемпе вăрçса çӳрени, колхозниксен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине тĕрĕс çырманни тата ыттине те çырнăччĕ.

Заметкăра кăтартнă фактсене Канаш районĕнчи прокурор вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, редакцине çакăн пек пĕлтерчĕ: „Заметкă тĕрĕс, Грачева УК 111-мĕш статйипе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарса ĕçе милици тытăмне панă“.

„Йурăхсăр руководителсем колхоза хавшатаççĕ“

Трак йалсоветĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ курса вĕренме кайсан, ĕçе председателĕн заместителĕ Т. Василйев илсе йулнă. Кун хыççăн, Василйев колхоз пурлăхне йухăнтарма, салатма тытăннă, тесе çырса пĕлтернĕччĕ Макаров йалкор.

Заметкăна „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакци тĕрĕслеме ПСК(б)П Трак райкомне йанă. Парти райкомĕн секретарĕ Закамский йулташ ку заметкă пирки çапла пĕлтерчĕ: „Статйара автăр çырнисем пĕтĕпех тĕрĕс. Василйев Тимофей, патша саманинче офицер пулнăскер, колхоз правленине хĕсĕнсе кĕрсе колхоз председателĕн заместителĕпе завхоз ĕçĕнче сăтăрла ĕçлесе колхоза салатма тытăннă. 2000 пăт тулă, çулнă утăпа клевера çĕртсе йанă. Колхозниксемпе хирĕçнĕ, вăрçнă. Халĕ Василйева правлени членĕнчен, заместителĕрен те кăларнă. Следстви пĕтнĕ, ĕçе районри прокурор аллине панă“.

„Сăтăрçăсене ответ тыттармала“

Çакăн пек йатлă заметкăра Степанов йулташ Вăрмар районĕнчи Ĕçпепери колхоз руководителĕсем колхозра сăтăрла ĕçсем туса пурăнни çинчен çырнăччĕ.

Ку заметкăна „Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакци тĕрĕслеме ПСК(б)П Вăрмар райкомне йачĕ. Парти райкомĕ заметкăна тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Колхоз правлени составне çĕнĕрен суйланă. Кузьмина колхоз председателĕнче ĕçлеме пултарайманнине шута илсе ĕçрен кăларнă. Изосимовпа Быстричкина (малтан партирен кăларса судпа айăпланнăскерсем) бригадиртан кăларса суда панă.

ТЕМТЕПĔР

Тĕрлĕрен тĕслĕ кирпĕчĕрен тăвакан çурт

Ленинградри шултра блоксен 1-мĕш №-лĕ завочĕ тĕрлĕрен тĕслĕ кирпĕчсем тума пуçланă. 4 хутлă пурăнмалли çурт тума пурĕ 2 пин штук кирпĕч-блок кирлĕ. Блоксен малтанхи партине хĕрлĕ, сарă тата хăмăр тĕслĕ туса хатĕрленĕ.

Çакăн пек кирпĕчсенчен тăвакан çурт стенисене йатарласа тунă крансемпе хăпартаççĕ. Унта ĕçлеме пурĕ 5—6 çын çеç кирлĕ. Тĕрлĕ тĕслĕ кирпĕчĕсенчен тунă çуртсене тулашĕнчен сăрлама та, штукатур тума та кирлĕ мар.

1938 çулта Ленинград хулинчи Сызрански урамра кирпĕч-блоксенчен малтанхи çуртсене тума пуçлаççĕ.

(„Ленинградская правда“).

Сайра тĕл пулакан пулă

Нумайăх пулмасть Приморски тата Мезенски районсенчи пулăçăсем (Çурçĕр крайĕ) Шурă тинĕсре сайра тĕл пулакан „тинĕс йĕппи“ йатлă пулăсем тытнă. Çак пулă Хура тинĕспе Азов тинĕсĕсенче çеç пурăнать, çурçĕрте вăл нихăçан та тĕл пулман.

Çак пулăн форми уйрăмăнах тĕлĕнмеле, йĕке йеверлĕ, çивĕчĕ шăллă, чăсăк йанахлă.

(„Правда севера“)

Винт майракалă качакасем

Туркменири Карлюк тата Керкин районĕсенчи ухатниксем винт майракалă качакасем тытнă—аçине тата амине. Качакасем хăнăхса çитсе алла вĕреннĕ.

Çак илемлĕ чĕрчунсене Ашхабадри зоологи паркĕ сутăн илнĕ. Винт майракалă качакасене тытасси питĕ хĕн, çавăнпа та вĕсем халиччен зоопаркра пулман.

(„Туркменская искра“).

Пулă тасатмалли çĕçĕ

Мало-Вишерскри „Енергия“ алăста ертелĕнче (Ленинград облăçĕ) пулă тасатмалли çĕçĕсене массăлăн кăларма тытăннă. Çĕçĕсем тутăхман хурçăран тунă шăллă, çурма кукăр лезвиллĕ. Кун пек çĕçĕпе шуратнă чух пулă хупписем айакала сирпĕнмеççĕ, лезвисем хушшине хĕсĕнче йулаççĕ.

(„Советская торговля“).

Партизансен хушши

Н-ски чаçăн командирĕсем тайгара курăк пусса кайнă, ишĕле пуçланă хушă тупнă. Унăн çĕрурайĕнче кивĕ патрон гилзисем, сĕтел çинче—воззвани татăкĕ пулнă. Воззвани татăкĕ çинче „...Черкес тата Ильйиченко хресченсене интервентсем чĕрĕллех хырăмĕсене çурса шăн пулă тултарнă. Каçарăпăр-ши епĕр çакна? Çук, епĕр хайарран тавăрăпăр!“—тенĕ сăмахсене вулама май пулнă. Çак хушă интервенци çулĕсенче партизансен отрйачĕн штабĕ пулнă.

(„Красное знамя“).

Ача сачĕ уçрĕç

ЙЕТĔРНЕ. Çак кунсенче Йетĕрне хулинче ача сачĕ валли çĕнĕ çурт туса петерсе ĕçе кĕртрĕç. Çурт ăшчикки çав тери кăмăла кайать. Урайĕсем сăрлă, таса, çутă. Ачасем садра хавасланса пурăнаççĕ.

П. Здорнов.

СУД

Барышевсен жуликла ĕçĕ

Шупашкар хулинче Октябĕр урамĕнчи 4-мĕш номĕрлĕ çуртра пурăнакан гражданкă Марийа Степановна Барышева хула коммуналлă хуçалăхĕн Атăл урлă каçарнă çĕрте (перевозра) кассир пулса ĕçленĕ. Вăл кăçалхи ийунĕн 29—30-мĕшĕсенче билет сутса тунă 3.125 тенкĕ укçана, май пур çĕртенех, государствă банкне вăхăтра кайса памасăр тытса тăнă. Тепĕр кунне, ийулĕн 1-мĕшĕнче, Барышева тӳлев пĕлтерӳне çырнă та, çав укçана хăйĕн Александрă йатлă хĕрне парса хăварнă; госбанка леçсе пама хушнă. Хăй ĕçе тухса кайнă.

Александрă Барышева вăл укçана госбанка кайса паман, билет илнĕ те „Академик Карпинский“ пароход çине ларса Атăл тăрăх тухса шăвăннă. Пароход çинче Александра государствă укçипе ашкăнса çеç пурăннă: çынсене кивçен укçа панă, хăналантарнă, картла выляна, хăйне валли йапаласем туйаннă. Çапла майпа 3.125 тенкĕ укçана йалтах салатса йанă. Ийулĕн 22-мĕшĕнче ăна çав пароход çинчех тытнă.

Нойабĕрĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи халăх сучĕ Барышевăсен ĕçне пăхса тухрĕ. Суд Марийа Барышевăна çулталăк çурăлăха, Александрă Барышевăна виçĕ çуллăха хупса лартмала, 3 125 тенкĕ укçине шыраса илмеле турĕ.

Мих. Полетайев.

„Чапайев“ кинокартинă кăтартрĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Нойабĕрĕн 10-мĕшĕнче Кечкейри туллимар ватам шкулта „Чапайев“ кинокартинă кăтартрĕç. „Чапайев“ картинă шкул ачисене çав тери кăмăла кайрĕ.

6-мĕш класра вĕренекен И. Музйаков.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн 264-ш номĕрĕнче В. М. Молотов йулташ 1937 çулхи нойабĕрĕн 6 мĕшĕнче Пысăк театрта чăплă заседанире „Октябĕр революцийĕ çирĕм çул тултарнă тĕле“ тунă докладра 2-ш страницăри 4-мĕш колонкăн 3-мĕш абзацĕнче „харпăрса“ тесе йанăш пичетленнĕ, ăна „хăпарса“ тесе вуламала.

2-мĕш страницăра 2-мĕш абзацра фрончĕ вырăнне фончĕ тесе вуламала.

3-мĕш страницăра 2-мĕш колонкăра çакăн пек йанăш предложени пур: „Урăхла каласан, халăхăн пĕр вуннăмĕш пайĕ, пуйан çынсенчен тăракан пайĕ. Халăх доходĕнчен пĕр чĕрĕке йахăн лекцисене...“ Ăна çапла тӳрлетсе вуламала: „Урăхла каласан, халăхăн пĕр вуннăмĕш пайĕ, пуйан çынсенчен тăракан пайĕ, халăх дохочĕн ытти виçчĕрĕкне хăй касийсене“...

3-мĕш страницăри йулашки колонкăн 2 мĕш абзацĕнче çапла пичетленнĕ: „Унтанпа çĕршыва социалисăмла çĕнĕле улăштарса пыма пуçланăранпа 20 çул хушши“.

Ăна çапла вуламала: „Унтанпа, çĕршыва социалисăмла çĕнĕле улăштарса пыма пуçланаранпа, 20 çул иртрĕ“.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Конторă валли уйрăм пӳлĕм тата специалиссем валли

ХВАТЕРСЕМ

КИРЛĔ.

Хак килĕшӳ тăрăх.

Çак адрĕспа пĕлтермеле: Урицкайа урамĕ, 13, Чăвашмелтрест. Телефон № 4—16 йе 2—16.

3—1

Промкоопераци системин бухгалтери учочĕ ĕçĕсене пĕлекенсем

4 бухгалтер-ревизор

васкавлă кирлĕ.

Условисемпе паллашма çак адрĕспа пымала Шупашкар, Кадыков урамĕ, 7—9. Телефон № 3-22.

3—3 Чăвашкулпромсойуз.

Пур колхозсене те асăрхататпăр!

Клевер вăррине планран ирттерсе ытлашши панăшăн колхозсене памалли премисене, çавнашкалах вăлăхлăх вăрă парассине те кăçалхи декабĕрĕн 1-мĕшĕчен клевер вăррине парса татнă колхозсене çеç параççĕ.

Клевер вăррине декабĕрĕн 1-мĕшĕ иртсен тин парса татакан колхозсене вăрлăхлăх вăрă тата премисем памаççĕ.

Госсортфонд
Йĕтĕн хатĕрлев кантурĕ.

2—1.

Шупашкарти „Красный мебельщик“ ертелне

СДЕЛНĂ ĔÇЛЕМЕ

столярсем кирлĕ.

3—3 Правлени.

Чăвашсен Государствă Педагогикă Институчĕ

Чăвашсен Учител Институтне вĕренме кĕме хатĕрленмели курса татах хушса илет

КУРСА

17 çулхисенчен пуçласа 34 çулхисем таран, ватам шкулсенчен вĕренсе тухнисене йе ватам шкулта вуннăмĕш класра вĕреннисене тата педучилищăра, рабфакра, техникумра йулашки çулхи курсра çур çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

КУРСАНТСЕНЕ

кашни уйăха 64 тенкĕ стипенди тата 20 тенкĕ хватер валли параççĕ.

Çĕнĕрен илнисене кăçалхи нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Зайавленисене Пединститут директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала: автобиографи, вĕренни çинчен справкă йе аттестат, çурални çинчен справкă, сывлăх пирки справкă, виçĕ фотокартăчкă. Зайавленисене кăçалхи нойабĕрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—1

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 875. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—[illegible] п. л.